Пĕр №-рĕ 10 пус. 19-мĕш çул тухать.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1937 НОЙАБĔР 5 ЕРНЕКУН 255 (4767)-мĕш №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ

Редакципе кантур адресĕ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйăн 6—23

Комсомол тата ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавĕсем

Пирĕн çĕршывра çамрăксен организацийĕсене ССР Сойузĕн Аслă Совет депутатне суйлама кандидат тăратма права панă. Çакă вăл совет çĕршывĕнчи çамрăк ăрăвăн аслă прави пулса тăрать. Ку правана Октябĕрти Социалисăмла револуцире çĕнсе илнĕ, çĕнсе илсе Сталинла Конституцинче çырса хунă.

Аслă Совет суйлавĕсем—пирĕн çĕршыв пурнăçĕнче шутсăр пысăк политикăла событи. Мĕлйуншар çамрăк суйлавçăсем, социалисăм тунă çĕрте активлă ĕçлекенскерсем, партипе комсомол йертсе пынипе, суйлавсен историлĕ кунĕнче—декабĕрĕн 12-мĕшĕнче—политикăла ăнланулăхпа пĕтĕçӳлĕх примерне кăтартĕç, хăйсен сассисене пирĕн тăван çĕршывăн чи лайăх та çирĕп çыннисемшĕн, Ленин — Сталин партийĕшĕн, коммунисăм ĕçне пĕтĕм вăйне хуракан çынсемшĕн парĕç.

Тĕрлĕ ăрусем, ашшĕсемпе ачисем, никам пăсмала мар çирĕп çыхăну тытпи—револуци çыннисен чи малтан палăракан уйрăмлăхĕ. Сталинла епохă пăхса çитĕнтернĕ çынсем—çамрăк рабочисем, колхозниксем, вĕренекенсем, çамрăк совет интеллигенчĕсем пĕтĕм телейлĕ, ирĕклĕ пурнăçа вĕсене рабочи клас, болшевиксен аслă партийĕ туса панине лайăх ăнланаççĕ.

Сталинла епохăри çамрăк ăру умĕнче пурнăçра калама çук чаплă çул, вĕçĕ-хĕррисĕр аслă майсемпе сарлака горизонтсен тĕнчи уçăлса тăрать. Совет çĕршывĕнчи çамрăксем тулли сĕткенлĕ политикăла пурнăçпа пурăнаççĕ. Пирĕн çĕршывра депутатсене суйласси пурне те тивĕçлĕ пулса тăрать. Вунсакăр çула çитнĕ граждансем, мĕнле расăран, мĕнле нацирен пулнине пăхмасăр, мĕнле социаллă ушкăнра çуралнине пăхмасăр, пурте депутатсене суйлама та, суйланма та пултараççĕ.

Октябĕрти Аслă Социалисăмла револуци етемлĕхĕн чи лайăх ĕмĕчĕсене пурнăçа кĕртрĕ, ĕççыннисене чухăн та мĕскĕн пурнăç çатлăхĕнчен çĕклесе хăпартрĕ, пирĕн çамрăксене коммунисăмшăн пурăнма тата ĕçлеме, пĕтĕм ĕççыннисене те пекех, пур правасем те, пур майсем те пачĕ. ССР Сойузĕнчи халăх йышĕнче социалисăм стройĕн ырлăхлă условийĕсенче çуралса çитĕннĕ ăру—хĕрĕх процент ытла. Мĕн тери пысăк вăй хурса, мĕн тери тимлĕн ĕçлесе тата ĕçхалăхĕн пĕтĕм тăшманĕсемпе йепле хайаррăн кĕрешсе парти пирĕн çĕршывăн ирĕклĕхне хӳтлесе хăварма, халăх валли социалисăм ырлăхĕсене çĕнсе илме пултарни çинчен çамрăксене чĕррĕн, уççăн каласа памала.

Капиталисăм çĕршывĕсенче економикăла тата политикăла правасăрлăх—çамрăксен йаланхи тӳпи. Фашисăм çамрăксене капиталăн чĕлхесĕр йăваш чурисем вырăнне хурать, вĕсене валли пĕр права çеç хатĕрлесе хунă—хĕн курса пурăн та, выçă вил. Çавнашкал пурнăçа хирĕç—социалисăм çĕршывĕнчи çамрăк граждансен çутă, ăнланулă политикăла пурнăçĕ. Обшчествă пурнăçне, государствă управленине активлăн хутшăнни—совет çамрăкĕсен тата вĕсен авангарчĕн—Ленинла комсомолăн йаланхи тĕслĕхĕ.

Стахановкă, парашутискă, Ленинла комсомолăн хастарлă работникĕ пулса тăракан Татйана Федоровăна пирĕн тăван çĕршыври ĕççыннисем, пĕтĕм совет çамрăкĕсем пĕлеççĕ. Акă мĕншĕн ĕнтĕ—Мускаври „Память революции 1905 года“ йатлă вагонсем йусакан заводри рабочисен, инженерсен тата служăшчисен суйлав умĕнхи пухувĕ Татйана Викторовна Федоровăна, 1915 çулта çуралнăскере, ПСÇЛКС членне, метростройăн йатлă стахановкине, пурте пĕр шухăшлă пулса, Сойуз Совечĕн депутатне суйлама кандидата тăратнă. Татйана Федорова—Ленин—Сталин партийĕ пăхса çитĕнтернĕ ăнланулă çамрăксен чĕрĕ тĕслĕхĕ.

Уралвагонзаводри çичĕ пин рабочи, инженерсем, техниксем тата служăшчисем Сойуз Совечĕн депутатне суйлама Совет Сойузĕн çамрăк, хăйулă, паттăр Геройне—Сергей Черныха кандидата тăратнă. Амур çинчи Комсомолск хулинче машинсем тăвакан заводри рабочисем, инженерсем тата техниксем Сойуз Совечĕн депутатне суйлама паттăр патриоткăна — Валентина Хетагурова комсомолкăна кандидата палăртнă. Урус-Мартановск районĕнчи „Путь Ленина“ колхозри колхозниксен суйлав умĕнхи пухувĕ, партире тăман колхозниксем сĕннĕ тăрăх, Сойуз Совечĕн депутатне суйлама кандидата колхоз председателне Али Гучикова тăратнă. Трактăрсемпе ĕçлекен хĕрарăмсен комсомолла бригадин бригадирне Паша Ангелинăна,—ун çинчен Украинă тулашĕнче те таçта çитиччен чап сарăлнă, — Политотдел йачĕпе хисепленекен колхозри колхозниксен суйлав умĕнхи пухувĕ Сойуз Совечĕн депутатне суйлама пĕр саслăн кандидата тăратнă.

Аслă Совет депутатне суйлама рабочисемпе хресчênсен телейĕшĕн паттăррăн кĕрешекен борецсене, Октябĕрти Социалисăмла револуцин шанчăклă ывăл-хĕрĕсене тăратать те халăх. Пирĕн çĕршывăн çамрăк çыннисем, вĕсем Сталинла пйатилеткăсен çулĕсенче, ССР Сойузне индустрилессишĕн, колхоз стройне тĕреклетессишĕн кĕрешсе, хайар класлă çапăçусенче ӳснĕ те пиçĕхнĕ. Партишĕн, халăх ырлăхĕшĕн пурăнассинчен уйрăм тăракан пурнăç çук та вĕсен.

Болшевикла парти йертсе пыракан тăвата мĕлйуллă комсомол—Аслă Совета суйланă чухне çамрăксен пĕтĕм сийĕсем хушшинче ĕçлеме мĕн тери хăватлă, активлă вăй пулса тăрать вăл! Комсомол умĕнче пайанхи кун тăракан чи аслă политикăла задачă вăл—тĕплĕн хатĕрленсе, Аслă Совет суйлавне ирттерес ĕçре партипе пур майсемпе те пулăшасси пулать. Суйлав кампанине хĕрӳлĕ, хастарлă хутшăнни, çав ĕçе хуларипе йалти совет çамрăкĕсен мĕн пур сийĕсене йавăçтарни,—кашни комсомол организацийĕнчен, кашни комсомолецран акă мĕн ыйтаççĕ халĕ. Йавăр политикăла екзамена тытасси, ĕç ăнăçлăхне татакан тапхăрта çамрăксен массисемпе пĕрле тата массăсен пуçĕнче пуласси, вĕсемпе пĕрле Аслă Совет депутатне суйлама кандидатсем палăртасси—Ленинла комсомолшăн пысăк чыслăх ĕçĕ.

Пĕтĕм çамрăксем хушшинче суйлав умĕнхи агитаципе пропагандăна организацилесси, вĕсен пуçĕнче пулса, вĕсене йертсе пырасси, суйлав участкисенче активлăн ĕçлесси—пысăк задачă, ăна пурнăçлама пĕтĕм вăйсене пухмала. Анчах час-часах, пĕтĕм çамрăксем хушшинче ăнлантару ĕçне тарăн туса пырас вырăнне, комсомол организацийĕсен руководителĕсем политикăла çатăлтатас йенне, ĕçлеме уйăрнă агитатăрсене шутласа çеç пырас йеннеле сулăнса кайаççĕ.

ПСÇЛКС организацийĕсен, кашни комсомолецăн ответлăхĕ халĕ чылай ӳсет. Уйрăмăнах комсомолăн йалти ĕçпе ролĕ пысăк. Парти организацийĕсем çук çĕрте комсомол çине Аслă Совета депутатсем суйланă чухне партипе колхоз массисен активлăхне организацилеме пур йенчен те пулăшас политикăла задачă тухса тăрать.

Комсомолецсен сталинла ăрăвĕ хăй пĕтĕм çамрăкĕсен политикăла активлăхне пĕтĕçтерме тата организацилеме пултарнине ĕçпе кăтартрĕ. 1937 çулхи декабĕрĕн вуниккĕмĕшĕнче, Аслă Совета суйлакан кун, комсомолецсем, çамрăк рабочисем тата хресчен çамрăкĕсем хăйсен аслă амăшне — совет çамрăкĕсен харсăр ăрăвне телейлĕ пурнăç панă болшевиксен Пĕтĕм Сойузри коммунисла Партине хĕрӳлĕ йуратнине, уншăн хăйсен пĕтĕм вăйне пама хатĕр тăнине кăтартĕç.

„Правда“.

Совет индустрин пысăк çĕнтерĕвĕ

„2-3-2“ текен хăвăрт çӳрекен паровоз туса кăларнă

Октябĕр револуци çирĕм çул тултарнă йатпа парнелесе, Коломнăри (Мускав облăçĕ) машиностройени завочĕ „2—3—2“ текен хăвăрт çӳрекен, сывлăша сирсе пыракан формăлă паровоз туса кăларнă. Паровозăн конструкцине паровозсем тăвас ĕçри техникăн чи çĕнĕ çитĕнĕвĕсемпе усă курса тунă. Унăн управленине механизациленĕ. Паровоз çине пит вăйлă прожектăр лартаççĕ, вăл çĕрле çула виçĕ километр малала çутатса пыраканскер пулать. Машинис будкине сивĕре шăнса пăрланиман кантăк лартнă. Паровоз сехетре 150 километр кайма пултарать.

(ТАСС).

Метро строителĕсем Мускав ĕççыннисене Октябĕр праçникĕ йачĕпе панă парне

Метрон Покровски радиусĕнче сăнавлă пойăс çӳренĕ

Нойабĕрĕн 3-мĕшĕнче, каçхине, Мускаври метрон çĕнĕ радиусĕнче—Покровски радиус—„Площадь революции“ станцирен „Курский вокзал“ станцине пирвайхи сăнавлă пойăс çӳренĕ.

Станци перронĕнче пулнă строителсем-рабочисем, инженерсем, техниксем пойăса хаваслăн алă çупса, „урра“ кăшкăрса „Сывă пултăр Сталин йулташ!“ тесе саламласа кĕтсе илнĕ.

Пойăс ку çула вунă минут хушшинче тухнă.

(ТАСС).

ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет секретарĕ А. Ф. ГОРКИН йулташ. Ăна Канаш Суйлав округĕнчен Националнăçсен Советне депутата суйлама кандидата палăртнă.

(Сойузфото).

Кувакинă

Райĕçтăвком председателне СТЕПАНОВА ПСК(б)П райком секретарне СОМОВА

Сирĕн районри ыраш калчи çинче талкăшпех вылăх çӳрет. Çавна май хăшпĕр уйсенче, сăмахран, Суťажнайра ыраш калчине таптаса пĕтернĕпе пĕрех йе хытă ватса пĕтернĕ. Ку ĕç кулак ĕçĕ, тесе шутлаççĕ Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Обкомĕ. Халăх тăшманĕсем, колхозсен тата колхозниксен тăшманĕсем кăна çавăн пек тума пултараççĕ. Кĕтӳ çӳретни ыраш калчине ватса пĕтерет, ыраш тухăçлăхĕ йур айне калча мĕнле кĕрсе йулнинчен килет. Халĕ ăна кашни çын пĕлет.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе Обком сире çак ĕçсене тума хушать: кĕр калчи çинче халех кĕтӳ çӳретме чарăр, çав кĕтӳ çӳретес тăшманла ĕçе организацилекенсем тăрăх хытă çапăр, колхозсен тата колхозниксен тăшманĕсене отпор пама халăха мобилизацилĕр.

Хăшпĕр уйсенче çумкурăк нумай. Çавăн пек уйсенче çумкурăкĕсенчен массăлăн тасататассине организацилĕр.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ **Спасов.**

Обком секретарĕ **Петров.**

Совет пичечĕ—социалисăмла кулturăн пултарулă вăйĕ

1913 çулта патша Российĕнче 859 хаçат (вĕсенчен 84 çеç вак халăхсен чĕлхипе) кăларнă. 1936 çулта ССР Сойузĕнче 9.250 хаçат (вĕсенчен вак халăхсен чĕлхипе 2.965 хаçат, йе 35,3 хут ытларах) кăларнă.

ССР Сойузĕнчи хаçатсем ССР Сойузĕнчи халăхсен 69 чĕлхипе, кĕнекесем 111 чĕлхепе тухаççĕ.

„Правда“ тиражĕ 1912 çулта 60 пин екземплйартан та иртеймен, 1936 çулта вăл пĕр мĕлйун та 900 пин екземплйара çитнĕ.

Пĕтĕм хаçатсен разовăй тиражĕ 1913 çулта 2 мĕлйун та 729 пин екземплйар пулнă, 1936 çулта вăл 37 мĕлйун та 971 пин екземплйара çитнĕ.

Сталинла Конституцине 62 чĕлхепе 27 мĕлйун та 500 пин екземплйар пичетлесе кăларнă. Сталин йулташăн Конституци пройекчĕ çинчен тунă докладне 15 мĕлйун та 400 пин екземплйар пичетлесе кăларнă.

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ çарĕн командирĕсене Совет Сойузĕн Геройĕ йатне парасси çинчен

ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ çапла йышăнать:

Совет Сойузĕн оборонă хăватне тĕреклетес тĕлĕшпе Правителствă панă специалнăй заданисене кăтартулă пурнăçа кĕртнĕшĕн тата ку ĕçре паттăрлăх кăтартнăшăн Совет Сойузĕн Геройĕ йатне парас:

1. Иван Алексейевич Лакейев майора.
2. Абрам Григорйевич Абрамович лейтенанта.

ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕ

М КАЛИНИН.

ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет секретарĕшĕн—ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Президиумĕн членĕ

А. АНДРЕЙЕВ.

Мускав, Кремл, 1937 çулти нойабĕрĕн 3-мĕшĕ.

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ çарĕн командирĕсене, политработникĕсене, инженерсемпе техникĕсене орденсемпе наградăланă

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ çарĕн пĕрлешӳвĕсене, чаçĕсемпе подразделенийĕсене çар ĕçне, политикăна тата техникăна вĕренес ĕçре калама çук чаплă çитĕнӳсем тунăшăн, ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ 68 командира, политработника, инженера тата техника орденсемпе наградăлама йышăннă.

Арженухин Ф. К. полковника, Давыдов—Лучицкий В. В. аслă лейтенанта, Веревка В И. аслă лейтенанта, Реа В. Х. лейтенанта, Кузнецов С. А. лейтенанта Ленин орденĕпе наградăланă.

Хĕрлĕ Йалав орденĕпе 48 çынна, Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе 12 çынна, Знак Почета орденĕпе 3 çынна наградăланă.

(ТАСС).

Çĕршывăн чи лайăх çыннисем—ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйламали кандидатсем

Пĕтĕм çĕршыври ĕççыннисем çĕршывăн чи лайăх çыннисене, Ленинăн—Сталинăн аслă ĕçĕшĕн пĕтĕм чĕререн тăракансене, ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама кандидата палăртаççĕ.

Иваново йал суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи канашлува ĕççыннисемпе обшчествăлă организацисен представителĕсем 1,300 çын ытла пухăннă.

Середск комбинатĕнчи специалист Качалов йулташ канашлура çапла каланă:

— Рабочисем, инженерла-техникла работниксем тата служăшчисем мана çакна калама хушрĕç: вĕсем Сойуз Советне депутата суйлама пĕрремĕш кандидата етемлĕхĕн аслă генийне—Иосиф Виссарионович Сталина палăртаççĕ.

Вăл каланине канашлува пухăннисем çулпуçне саламласа тăвăллăн алă çупса тата саламлă сăмахсем каласа йышăннă.

Канашлу Сойуз Советне депутата суйлама кандидата Сталин, Молотов, Каганович, Ворошилов, Калинин, Йежов, Шверник йулташсене, тата облăç ĕçтăвкомĕн председателне Марчук йулташа тата Лобова педагога палăрнă. Иваново суйлав округĕ тăрăх Националнăçсен Советне депутата суйлама кандидата канашлу ПСК(б)П Иваново обкомĕн пĕрремĕш секретарне—Симочкин йулташа палăртнă.

Сойуз Советне депутата суйлама кандидата йулашки кунсем хушшинче çак йулташсене палăртнă:

Кочетовка станцинчи (Тамбов облăçĕ) чи лайăх стахановеца, халĕ станцă начальникĕн заместителĕ пулса ĕçлеме лартнă Митрофан Йемелйанович Михин йулташа—чунçул çинче çав станцăра ĕçлекенсенчен; „Октябĕр“ йалхуçалăх ертелри (Белорус ССР, Пропойск районĕ) вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре ăнăçусем тунăшăн Ленин орденĕ илнĕ конюха Никита Йермолайевич Батовкин йулташа—çав йалхуçалăх ертелĕнчи колхозниксенчен; Куйбышев Гидроузелĕн строителствă начальникне, Сталинла тапхăрти чи пысăк сооруженисенчен пĕрине—Мускав-Атăл каналне тăвас ĕçе йертсе пынă Сергей Йаковлевич Жук йулташа—„Прожектор“ йалхуçалăх ертелĕнчи колхозниксенчен (Куйбышев облăçĕнчи Алексейевск районĕ).

Националнăçсен Советне депутата суйлама палăртнă кандидатсен хисепĕнче:

„Первое мая“ йалхуçалăх ертелĕнчи (Адыгей автономлă облăçĕ, Красногвардейск районĕ) стахановка-колхозница, колхозра социалисăмла ăмăртува пуçарса организациленĕ Беремхан Шхачева—çав йалхуçалăх ертелĕнчи колхозниксенчен; Бугулма МТС (Тутар АССР) комбайнер-орденоносец, Пĕтĕм Сойузри Совегсен Чрезвычайлă VIII-мĕш Сйесĕн делегачĕ пулнă Зарипа Харисович Харисов—МТС коллективĕнчен; пограничнăй отрйад лейтенанчĕ Александр Степанович Петров,—ăна совет чиккине сыхă хуралланăшăн хисеплĕ хĕçпăшалпа наградăланă—„За освобождение Бессарабии“ колхозри колхозниксенчен (Молдаван АССР, Рыбницк районĕ); Сталинградри тактор завочĕн чукун шăратакан цехĕн начальникĕ орденоносец Николай Николайевич Дубинин—завод коллективĕнчен.

(ТАСС).

18 пин колхоз клубĕ

Патша влаçĕ йала тĕттĕмлĕхпе тирпейсĕрлĕхре усранă. Совет влаçĕ йалта нумай вулав çурчĕсем, колхоз клубĕсем, социалисăмла кулtură çурчĕсем туса пачĕ.

1936 çулта çĕршывра 63.771 вулав çурчĕ пулнă. Колхоз клубĕсем 1929 çулта 980, 1936 çулта 18 пин пулнă. Нумай колхоз клубĕсем хуларисенчен йулмаççĕ. Тĕслĕхрен, Ленинград облăçĕн Кириллов районĕнчи „Красный Пахарь“ колхозăн клубĕ чаплă чул çуртра вырнаçать. Унта 500 çын вырнаçмалăх пысăк зал, калаçакан кино тата радио итлемели пӳлĕм пур.

Инçетри Байкал лешйенчи тайгара „Победитель“, Киров йачĕпе, Молотов йачĕпе тăракан, „Серп и Молот“ йалхуçалăх ертелĕсен (Бурйат-Монголи) колхозникĕсем пĕрле икĕ хутлă кулtură дворецĕ тунă. Ку çурт республикăри пысăк çуртсенчен пĕрийĕ. Кулtură дворецĕнче калаçакан кино, радиостуди, вĕренмели кружоксен залĕсем тата сценă пур.

Смоленск облăçĕнчи Козелск МТС-че тунă колхоз радио çурчĕ колхозлă йал кулturин лайăх свидетелстви пулса тăрать. Вăл çурт икĕ пин киле радио парать. Унăн аппарат залĕ, икĕ студи, массăлă ĕç валли пӳлĕм, лаборатори, мастерской пур.

Йалти район центрĕсенче тунă кулtură çурчĕсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. 1933 çулта кун пек кулtură çурчĕсем 531 пулнă, иртнĕ çул вĕсем 3.250 пулнă.

(ТАСС).

Совет çĕршывĕ çичĕ мĕлйард пăта йахăн тырпул пухса илет

Колхоз стройĕ çирĕпленни, йалхуçалăхне техникăпа наукă кĕрсе çитни, колхозсемпе совхозсенче стахановла йухăм анлăн сарăлни Сталин йулташăн: çитес 3—4 çултан, кашни çулах 7—8 мĕлйард пăт тыран тырă туса илмеле тăвас заданине пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешес ĕçре пысăк çитĕвӳ тума май пачĕç.

Пирĕн çĕршывра тырпул туса илесси çуллен çулах ӳсе пырать. Патша Российĕнче 4—5 мĕлйард пăта йахăн тырă туса илнĕ. 1937 çулта, малтанлăха панă хисепсем тăрăх, пĕрчĕлĕ тырпул 6,8 мĕлйард пăт туса илнĕ.

(ТАСС).

Улатăрти митинг

Нойабĕрĕн 2-мĕшĕ. Çичĕ сехет çине кайнă. Вĕтĕ çăмăр вĕлкĕшет. Каç пулса килет. Анчах пайан праçник, савăнăç, хаваслăх. Улатăр хулинчи нумай пиллĕ халăх хăй тăван çĕршыва, Ленин—Сталин партине, аслă Сталин йулташа чĕререн йуратнине, вĕсен ĕçĕшĕн хăйĕн пĕтĕм вăйне, кирлĕ пулсан, хăйĕн пурнăçне пама хатĕр тăнине кăтартма тухнă. Çавăнпа та пайан Улатăр хулинчи шкул ачисенчен пуçласа ватă старихсемпе карчăксене çитиччен, пурĕ 10 пин çын ытла митинга пынă. Хула историйĕнче митингсемпе демонстрацисем сахал мар пулнă. Анчах нойабĕрĕн 2-мĕшĕнчи пек вăйлă та хăватлă митинг тата çавăнăçлă митинг нихăçан та пулман.

Митинг уçăлать. Парти Улатăр райкомĕн секретарĕ Вйаткин йулташ парти Чăваш Обкомĕпе правителствă йачĕпе салам калама парти Обком секретарне Г. И. Иванов йулташа сăмах парать. Иванов йулташ хăйĕн сăмахĕнче пирĕн совет çĕршывĕ Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе çак çирĕм çул хушшинче тунă çитĕнӳсем çинчен, çак çитĕнӳсене Сталинла Конституци çине çырса çирĕплетсе хуни çинчен калать. Вăл Сталинла Конституци тăрăх пирĕн çĕршывра суйлав кампанийĕ сарăлса кайни тата суйлава ирттерес тĕлĕшпе тăракан задачăсем çинчен каларĕ.

— Улатăр суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи канашлу ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн пĕрремĕш депутатне хаклă Сталин йулташа палăртрĕ,—тесе каласан, митинга пухăнна вунă пин çын урра кăшкăрни, Интернационал йурлани хула çумĕн чăсăлса выртакан. Сăр шывĕ тăрăх йавраса кайать.

Каштанова тата Поросенков йулташсем хăйсен сăмахĕнче Улатăр суйлав округĕнчи суйлавçăсене суйлав умĕнхи округ канашлăвĕ йышăннă резолуцишĕн тăма чĕнчĕç. Митинг вĕсен сĕнĕвне пĕр саслăн, „Епĕр Сталиншăн сасăлатпăр“, „Сывă пултăр болшевиксен партийĕ“ „Сывă пултăр нумай мĕлйунлă совет халăхĕ“ тесе саламласа йышăнчĕ.

Р. Шашков.

Стецкий йулташ докладне итлĕр

Пайан, нойабĕрĕн 5-мĕшĕнче, Мускав вăхăчĕпе каçхине 6 сехет те 30 минутра Коминтерн радиостанцийĕ тата мĕн пур кĕске хумлă передатчиксем урлă Стецкий йулташ доклад тăвать. Доклад теми: „ОКТЯБĔРТИ СОЦИАЛИСĂМЛА АСЛĂ РЕВОЛУЦИ 20 ÇУЛ ТУЛТАРНИ“. Доклада массăлăн итлессине организацилĕр.

ССР СОЙУЗӖН АСЛӐ СОВЕТНЕ СУЙЛАС УМӖН

Союз Советне суйламали Улатӑр суйлав округӗнчи суйлав умӗнхи округ канашлӑвӗ

Улатӑр суйлав округӗнчи суйлав умӗнхи округ канашлӑвӗ Сталин йулташ патне йанӑ ҫыру

Пирӗн хаклӑ учител, тус тата тӑван атте Иосиф Виссарионович!

Епӗр, Улатӑр суйлав округне кӗрекен Улатӑр, Патӑрйел, Йӗпреҫ, Шӑнкӑртам, Шӑмӑршӑ, Куйакинӑ, Тӑрхан, Пӑрачкав районӗсенчи 150 пин суйлавҫӑсен—рабочисен, хресченсен, совет интеллигенцин тата пӗтӗм ӗҫҫыннисен представителӗсем, пурӗ 475 ҫын, пайан, 1937 ҫ. нойабӗрӗн 2-мӗшӗнче ССР Союзӗн Аслӑ Совечӗн депутачӗсене суйлама палӑртнӑ кандидатсене сӳтсе йавма пухӑнтӑмӑр.

Пире, заводсемпе фабрикӑсенчи рабочисен, колхозсенчи колхозниксен, совхозсенче ӗҫлекен рабочисен, коммунисла организацисен, комсомол организацисен, профессилӗ союзсен пухувӗсем, ӗҫҫынни обшчественисем суйланӑ. Пирӗн малтанхи сӑмах, чӗререн йуратнӑ сӑмах—Октӑбӗр революци ҫӗнтерӳвӗн, социалисӑм ҫӗнтерӳвӗн организатӑрне — Ленинпа Сталинӑн аслӑ партине, ССР Союзӗн ҫӗнӗ Конституцине тӑвакан тӑван аттене, аслӑ учителе, халӑхсен сулпуҫне Иосиф Виссарионович Сталин йулташа пулаҭ. Епӗр Ленин—Сталин парти ӗҫӗшӗн, сирӗн, Сталин йулташ, ӗҫӗршӗн чӗререн, пӗтӗм вӑйхала хурса кӗрешме хатӗр тӑнине пӗтӗм тулли кӑмӑлпа калатпӑр.

Хамӑр суйлав округӗнчи пур рабочисемпе колхозниксен тата пӗтӗм ӗҫҫыннисен йачӗпе ВКП(б)П Тӗп Комитетне тата хамӑрӑн йуратнӑ аттене, аслӑ учителе, халӑхсен йуратнӑ сулпуҫне Сталин йулташа чӗререн хӗрӳлӗ салам йанатпӑр, телейлӗ те савӑнӑҫлӑ пурнӑҫ туса панӑшӑн рабочисемпе хресченсен йачӗпе спасибӑ калатпӑр.

Паровозсем йусакан заводри, Улатӑр деповӗнчи, хӑма ҫуракан заводри рабочисемпе служащисен, инженерсемпе техниксен пӗрлехи пухувӗсенче, „Красный луч“, „Марс“, „Сталинград“, „12 лет Октября“, „Триер“, Сталин йачӗпе тӑракан, „Правда“, округри тата ытти колхоз колхозникӗсен аслӑ пухусенче иктӗ пысӑк савӑнӑҫпа, хаваслӑхпа сире, хаклӑ Иосиф Виссарионович, Улатӑр округӗнчен ССР Союзӗн Аслӑ Совечӗн Националԓнӑҫсен Советне депутата суйлама кандидата палӑртнӑ.

Епӗр, округри пур заводсемпе фабриксен, колхозсемпе совхозсен представителӗсем, хамӑр суйлав округӗнчи 150 пин суйлавҫӑ йачӗпе рабочисемпе хресченсен ҫав решенисемшӗн чӗререн тата пысӑк хаваслӑхпа тӑратпӑр, сирӗнтен, хаклӑ Иосиф Виссарионович пирӗн Улатӑр округӗнче сасӑланма килӗшмешкӗн ыйтатпӑр.

Сирӗн кандидата ССР Союзӗн Аслӑ Совечӗн депутатне суйлама палӑртса, пирӗн округри суйлавҫӑсем, хамӑрӑн социалисӑмла ҫӗршыври нумай мӗлйунлӑ халӑхсем пекех, хӑйсем пирӗн мухтавлӑ болшевиксен партине чӗререн шанса тӑнине, унпа сирӗн сыхӑну тытнине, хӑйсен чи сывӑх тусне — Сире, хаклӑ Сталин йулташ, чӗререн йуратнине кӑтартаҫҫӗ.

Пирӗншӗн сирӗн йатӑр вӑл—пирӗн ҫӗнтерӳсен хисеплӗхе, ӗҫҫыннисен телейӗпе савӑнӑҫӗ, пирӗн аслӑ тӑван ҫӗршыври халӑхсен йуратӳвӗпе тӑванлӑхӗ. Ҫак нумай мӗлйунлӑ халӑхлӑ ҫӗршыва чечеклентересшӗн есӗр, Сталин йулташ, хӑвӑрӑн пӗтӗм ӑстӑнна, хӑвӑрӑн пӗтӗм вӑйна, пурнӑҫна параттӑр.

Пирӗншӗн сирӗн мухтава тивӗҫ пурнӑҫ—ӗҫҫыннисене вӗҫӗмсӗр йуратнин примерӗ, паттӑрлӑх примерӗ, хамӑр тӑван ҫӗршывӑн тӑшманӗсемпе, троцкисла-бухаринла террориссемпе, шпионсемпе кӗрешес ӗҫре паттӑрлӑхпа шиклемӳсӗрлӗх примерӗ.

Пирӗншӗн сирӗн йатӑр, Сталин йулташ, коммунисӑмшӑн, пӗтӗм тӗнчери ӗҫҫыннисене капиталисӑм пусмӑрӗнчен, йунлӑ фашисӑм пусмӑрӗнчен ирӗке кӑларассишӗн, пӗтӗм тӗнчере совет влаҫӗ тӑвассишӗн кӗрешмели йалав.

Пирӗн тӑван коммунисен (болшевиксен) парти—ССР Союзӗнчи социалисӑм ҫӗнтерӗвӗн организатӑрӗ.

Сывӑ пултӑр пирӗн йуратнӑ сулпуҫ, хаклӑ Сталин йулташ!

Улатӑр суйлав округӗнчи ӗҫҫыннисен тата обшчествӑлӑ организацисен представителӗсен суйлав умӗнхи канашлӑвӗ йышӑннӑ РЕЗОԒУЦИ

ССР Союзӗн Аслӑ Советне суйламали Улатӑр округӗнчи рабочисен, служащисен, инженерсемпе техниксен, колхозниксен, коммунисла организацин, профессилӗ союзсен, комсомол тата ытти организацисемпе обшчественисен представителӗсен суйлав умӗнхи канашлӑвӗ ССР Союзӗн Аслӑ Советне Улатӑр суйлав округӗнчен депутата суйлама кандидатсем тӑратасси ҫинчен сӳтсе йаврӗ. Канашлу рабочисен, служащисен, инженерсемпе техниксен, колхозниксен пухувӗсем пӗр пуҫхӑшлӑ пулса пирӗн аслӑ тӑван ҫӗршыври мӗлйун ӗҫҫыннисен чӗрине хумхантаракан, хаваслӑх тата вӑй кӗртекен, ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем тума чӗнекен, халӑх тӑшманӗсене хирӗҫ кӗрешсе пире телейлӗ те савӑнӑҫлӑ пурнӑҫ патне илсе пынӑ **Иосиф Виссарионович Сталина** пӗрремӗш кандидата тӑратма йышӑннӑ решенисене хӗрӳлӗн хапӑл тӑваҭ.

Хӑйӗн пурнӑҫне, хӑйӗн ӑстӑнне халӑхсен телейлӗ пурнӑҫӗшӗн панӑ Сталинпа пӗрлех, канашлу пирӗн округри ӗҫҫыннисем ССР Союзӗн Аслӑ Совечӗн депутатне суйлама тӑратнӑ, хамӑр ҫӗршывӑн чи лайӑх ҫыннисен, коммунисӑм ӗҫӗшӗн чӗререн тӑрӑшса ӗҫлекен, Сталин йулташӑн сывӑх соратникӗсен—**В. М. Молотов, К. Й. Ворошилов, М. И. Калинин, Л. М. Каганович, А. А. Андрейев, Н. И. Йежов** йулташсен тата Совет Союзӗн Геройӗ **В. П. Чкалов** йулташӑн кандидатурисемшӗн тӑраҭ.

Ҫавӑн пекех тата канашлу Чӑваш республикин лайӑх ҫыннисене: Улатӑр суйлав округӗнчен ССР Союзӗн Аслӑ Совечӗн Союз Советне депутата суйлама Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн председателне **Л. С. Спасов** йулташа, Йӗпреҫ суйлав округӗнчен ССР Союзӗн Аслӑ Совечӗн Союз Советне депутата суйлама Вӑрнар районӗнчи Сталин йачӗпе тӑракан колхоз председателне орденоносец **Сергей Ксенофонтович Коротков** йулташа, Улатӑр суйлав округӗнчен Националԓнӑҫсен Советне депутата суйлама Улатӑрти паровозсем йусакан заводри бригадир-стахановкӑна **Тамара Алексейевна Моисейева** йулташа, Патӑрйел суйлав округӗнчен Националԓнӑҫсен Советне депутата суйлама Патӑрйел районӗнчи учителницӑна **Олга Тихоновна Харитонова** йулташа кандидата палӑртнине пысӑк хаваслӑхпа хапӑл туса йышӑнаҭ.

Канашлу пирӗн суйлав округӗнчи суйлавҫӑсем хӑйсен сассине пысӑк хаваслӑхпа та пысӑк кӑмӑлпа аслӑ Сталиншӑн, унӑн сывӑх соратникӗсемшӗн: Молотовшӑн, Ворошиловшӑн, Калининшӑн, Кагановичшӑн, Ждановшӑн, Андрейовшӑн, Йежовшӑн, Совет Союзӗн Геройӗ Чкаловшӑн, ҫавӑн пекех тата ордӗнлӑ Чӑваш республикинчи лайӑх ҫынсемшӗн, Ленин—Сталин парти ӗҫӗшӗн чӗререн тӑрӑшса ӗҫлекенсемшӗн: Спасов, Коротков, Моисейева, Харитонова йулташсемшӗн парасса шанса тӑраҭ.

Канашлу хӑйӗн хушшинчен доверенӑйсем уйӑрса, вӗсене обшчествӑлӑ организацисемпе тата ӗҫҫынни обшчественисемпе пӗрле кашни суйлав участокӗнче, суйлавҫӑсем хушшинче агитацилӗ ӗҫе анлӑн сарса йама хушаҭ. Историлӗ суйлав кунӗнче — декабӗрӗн 12-мӗшӗнче суйлавҫӑсем хӑйсен сассине пурте пӗр ҫын пек пулса ССР Союзӗн чи лайӑх ҫыннисемшӗн, халӑх тӑшманӗсене—фашисла бандитсене хирӗҫ, социалисӑм ҫӗнтерӗвӗшӗн кӗрешсе пиҫнӗ ҫынсемшӗн парса ССР Союзӗн Аслӑ Советне ҫӗршывӑн чи пархатарлӑ ҫыннисене суйлаччӑр.

Сывӑ пултӑр Сталинла Конституци—ҫӗнтерӳлӗ социалисӑм ҫӗршыв Конституцийӗ!

Сывӑ пултӑр аслӑ Совет Союзӗнчи халӑхсен ҫирӗп туслӑхӗ!

Сывӑ пултӑр пирӗн тӑван болшевикла парти, халӑхсен сулпуҫӗ тата ҫӗнӗ Конституци туса паракан хаклӑ Сталин йулташ!

Улатӑр суйлав округӗнчи суйлав умӗнхи округ канашлӑвӗн президиум членӗсем 23 ҫын алӑ пуснӑ.

Округри суйлав умӗнхи канашлу Улатӑр суйлав округӗнчи мӗн пур суйлавҫӑсене ЧӖНСЕ КАЛАНИ

Хаклӑ йулташсем!

Епӗр телейлӗ кунсенче, мухтавлӑ кунсенче, савӑнӑҫлӑ кунсенче пурӑнатпӑр. Епӗр хамӑршӑн, хамӑрӑн телейлӗ ҫӗршывшӑн, тӑван Сталин йулташшӑн, хамӑрӑн социалисӑмла государствӑшӑн, унӑн тӗреклӗ вӑй-хӑвачӗшӗн, чӑн-чӑн демократилӗ стройшӑн, хамӑрӑн телейлӗ те савӑнӑҫлӑ пурнӑҫшӑн савӑнса пурӑнатпӑр.

Пирӗн социалисӑмла аслӑ тӑван ҫӗршывра суйлав кампанийӗ анлӑн сарӑлса кайрӗ. Пирӗн ҫӗршыври нумай мӗлйунлӑ халӑх халӗ пӗртен пӗр шухӑшпа—социалисӑмла государствӑн Аслӑ Советне лайӑххисенчен чи лайӑххисене, тивӗҫлисенчен чи тивӗҫлисене суйлас шухӑшпа пурӑнаҭ. Декабӗрӗн 12-мӗшӗ — ССР Союзӗн Аслӑ Советне суйламали кун, пӗтӗм халӑхшӑн савӑнӑҫлӑ кун ҫывхарса ҫитеҭ.

Декабӗрӗн 12-мӗшӗнче темиҫе мӗлйуншар ӗҫҫыннисем суйлав йешчӗкӗсем (урнисем) патне савӑнса, мухтавлӑн пырса, хӑйсен сассисене тӑшмансене тӑпӑлтарса пӗтерессишӗн, малта пыракан етемлӗхӗн савӑнӑҫӗшӗн, хаклӑ Сталин йулташа, унӑн шанчӑклӑ соратникӗсене, коммунисӑм ӗҫӗшӗн чӗререн тӑрӑшса ӗҫлекенсене, хамӑрӑн социалисӑмла ҫӗршывӑн патриочӗсене параҫҫӗ.

Епӗр, Улатӑр суйлав округӗнчи рабочисемпе служащисен, инженерсемпе техниксен, колхозниксен представителӗсем, хамӑрӑн суйлав умӗнхи канашлува пуҫтарӑннӑскерсем, тӗнчери пӗртенпӗр социалисӑмла государствӑн пурнӑҫӗпе ӗҫӗсемшӗн пӗтӗм ответлӑха туйса, сире ССР Союзӗн Аслӑ Советне депутатсем суйланӑ чухне социалисӑмла тӑван ҫӗршыв ӗҫӗшӗн чӗререн, пӗтӗм вӑй-хала хурса ӗҫленине кӑтартма чӗнетпӗр.

ССР Союзӗн Аслӑ Совечӗн депутатне социалисӑмшӑн кӗрешсе тӗрекленнӗ ҫынсене ҫеҫ суйлӑр, хӑвӑрӑн сасӑсене хамӑрӑн тӑван ҫӗршыва йуратакансене, Ленин—Сталин парти ӗҫӗшӗн чӗререн тӑрӑшса ӗҫлекенсене, халӑх тӑшманӗсене хирӗҫ хайаррӑн кӗрешекенсене ҫеҫ парӑр.

Епӗр хамӑрӑн ҫӗнтерӳсене коммунисен партийӗ йертсе пынипе, Сталин йулташ йертсе пынипе, тӗнчери империалисӑмла буржуазине тата унӑн троцкисла-зиновйевла-бухаринла-рыкӑвла бандисене тата буржуалӑ-националиссене хирӗҫ хайаррӑн кӗрешсе пынипе тунине асра тытӑр. Вӗсем, ӗҫҫыннисен усал тӑшманӗсем, пирӗн телейлӗ пурнӑҫа, Октӑбӗрти Социалисӑмла Аслӑ революцире кӗрешсе илнӗ, Сталинла Конституци ҫине ҫырса ҫирӗплетнӗ ырӑ пурнӑҫа туртса илме хӑтланнӑ.

Тӑшмансем хӑйсен ӗмӗтне пурнӑҫа кӗртеймерӗҫ, болшевиксен партийӗ, Сталин йулташ йертсе пынипе ҫак усал бандӑсене халӑх кӑкласа ывӑтрӗ. Ленин—Сталин партийӗ Маркс — Енгелс — Ленин — Сталин йалавӗпе хӑйуллӑн та шанчӑклӑн ӗҫхалӑх массисене социалисӑмлӑ илемлӗ пурнӑҫ, телейлӗ те савӑнӑҫлӑ, експлоатацисӗр пусмӑртан ирӗке кӑларнӑ пурнӑҫ патне илсе пычӗ. Ҫак парти йертсе пынипе, халӑхсен ҫулпуҫӗ Сталин йулташ йертсе пынипе ССР Союзӗнче социалисӑм тӑтӑкланах, ӗмӗрлӗхех ҫӗнтерчӗ, капиталисӑм йӗркипе пирӗн ҫӗршывра никам та кайала ҫавӑрма пултараймасҭ. ССР Союзӗн Аслӑ Советне пире ҫак ҫӗнтерӳсем патне илсе пынӑ ҫынсене ҫеҫ суйлӑр.

Улатӑр суйлав округӗнчи ӗҫҫыннисем, пирӗн ҫӗршыври мӗн пур ӗҫҫыннисемпе пӗрле, ССР Союзӗн Аслӑ Советне депутата суйлама епӗр йуратнӑ, хамӑрӑн сывӑх, тӑван туса, хӑйӗн пурнӑҫне нумай мӗлйунлӑ, нумай нацилӗ халӑх пурнӑҫӗпе тачӑ ҫыхӑнтарнӑ **Сталин** йулташа палӑртрӗҫ. Уншӑн, аслӑ Сталиншӑн паратпӑр епӗр хамӑрӑн сасӑсене!

Йулташсем, Улатӑр суйлав округӗнчи рабочисен, служащисен, инженерсемпе техниксен, колхозниксен нумай йышлӑ пухувӗсенче ССР Союзӗн Аслӑ Советне депутата суйлама Сталин йулташӑн шанчӑклӑ ученикӗсемпе соратникӗсене палӑртрӗҫ: Совет правителствин пуҫлӑхне —**В. М. Молотов** йулташа, **А. А. Жданов, К. Е. Ворошилов, Л. М. Каганович, М. И. Калинин, А. И. Микойан, Н. И. Йежов, А. А. Андрейев** йулташсене, Совет Союзӗн Геройне **В. П. Чкалов** йулташа.

Улатӑрти паровозсем йусакан заводри, Улатӑрти депори, 8-мӗш №-лӗ хӑма ҫуракан заводри рабочисемпе служащисем, инженерсемпе техниксем, Шмидт йачӗпе тӑракан, „Красный луч“, „Трактор“, „12 лет Октября“, „Хӗрлӗ Туҫа“ колхозниксем ССР Союзӗн Аслӑ Советне депутата суйлама ЧАССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн председателне—**Л. С. Спасов** йулташа, орденоносец **С. К. Коротков** йулташа, Чӑваш республикинчи лайӑх ҫынсене, хамӑр тӑван ҫӗршывӑн шанчӑклӑ ывӑл-хӗрӗсене —**О. Т. Харитонова, Т. А. Моисейева** йулташсене кандидата тӑратнӑ.

Суйлав умӗнхи округри канашлу ҫав кандидатсене питӗ пысӑк хаваслӑхпа, ырӑ кӑмӑлпа йышӑнчӗ, канашлу ҫав кандидатсемшӗн тӑраҭ, Улатӑр суйлав округӗнчи пур суйлавҫӑсене те хӑйсен сассине халӑхӑн ҫак лайӑх представителӗсемшӗн пама чӗнеҭ.

Епӗр Улатӑр суйлав округӗнчи суйлавҫӑсене Ленин—Сталин парти тавра, халӑхсен ҫулпуҫӗ Сталин йулташ тавра тата тачӑрах пӗрлешме, ССР Союзӗн Аслӑ Совечӗн суйлавне производствӑлӑ ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем тунипе паллӑ тума чӗнетпӗр.

Сывӑ пултӑр Совет халӑхӗ, коммунисен партийӗ, тата халӑхсен аслӑ ҫулпуҫӗ Сталин йулташ!

Сывӑ пултӑр ССР Союзӗнчи халӑхсен никам ҫӗнтереймӗ туслӑхӗ!

Улатӑр суйлав округӗнчи суйлав умӗнхи канашлу

УЛАТӐР (хамӑр корр.) Улатӑр хули чаплӑ тумпа илемленнӗ. Хулан вӑрӑм урамӗсем урлӑ хӗрлӗ хӑмач ҫине: „Сывӑ пултӑр пире ҫӗнӗ Конституци туса панӑ Сталин йулташ!“, „ССР Союзӗн Аслӑ Совечӗн пӗрремӗш депутачӗ—Иосиф Виссарионович Сталин!“, „ССР Союзӗн Аслӑ Советне социалисӑмшӑн, рабочисемпе ӗҫҫыннисен пурнӑҫӗшӗн паттӑррӑн кӗрешекенсене суйлӑр!“, „Халӑх тӑшманӗсене — троцкисла бухаринла бандитсене вилӗм!“, тесе ҫырса ҫакнӑ лозунгсем хула халӑхне суйлав кампанине хастарлӑн хутшӑнма чӗнеҫҫӗ.

Улатӑр хулинчи паровозсем йусакан рабочисен клубӗнче Улатӑр суйлав округӗн суйлав умӗнхи канашлӑвӗ пухӑннӑ. 150 пин суйлавҫӑсен 475 представителӗсем Аслӑ Совета депутата суйлама кандидатсем тӑратасси ҫинчен сӳтсе йавма пухӑннӑ.

4 сехет ҫитнӗ. „Молния“ колхоз представителӗ (Йӗпреҫ р.) Петр Николайевич Николайев йулташ трибунӑ ҫине тухса тӑраҭ. Вӑл хумханаҭ. Анчах нимӗн васкамасӑр, пӗтӗм тулли кӑмӑлран Сталин йулташ йатне асӑнаҭ. Сталин йулташӑн пурнӑҫӗпе ӗҫӗ ҫинчен, вӑл пӑхса ӳстернӗ кадрсем ҫинчен калаҭ.

— Вӑрнар районӗнчи Сталин йачӗпе тӑракан колхоз председателӗ орденоносец С. К. Коротков Сталин йулташӑн ачи, вӑл пӑхса ҫитӗнтернӗ ҫын. Епӗр Коротков йулташран ӗҫлеме вӗрентӗмӗр. Вӑл хӑйӗн ӗҫӗпе пӗтӗм Чӑваш республикинчи колхозсене пример кӑтартрӗ. Ҫавӑнпа та пирӗн колхоз ӑна ССР Союзӗн Аслӑ Совечӗн Националԓнӑҫсен Советне депутата суйлама кандидата палӑртрӗ.

Улатӑрти паровозсем йусакан заводри рабочисен, служащисен тата инженерсемпе техниксен коллективӗн представителӗ Поросенков йулташ хӑйсен завочӗн коллективӗ Сталин йулташа Аслӑ Совет депутатне суйлама кандидата палӑртни ҫинчен каланӑ чухне „Урра“! „Тӑван Сталина, ҫӗнӗ Конституци туса паракан генийе—урра!“ тесе кӑшкӑрнӑ сасӑсем йанраса кайаҫҫӗ.

— Андрей Александрович Жданов йулташ Сталин йулташӑн сывӑх соратникӗ, Ленинград болшевикӗсен руководителӗ. Вӑл Горький крайӗнче ӗҫлесе крайа тата пирӗн Чӑваш республикне орден илме тивӗҫлӗ турӗ. Вӑл социалисӑмла тӑван ҫӗршывӑн мухтавлӑ ывӑлӗ. Ҫавӑнпа та хӑма ҫуракан 8-мӗш №-лӗ заводӑн коллективӗ ӑна ССР Союзӗн Аслӑ Совечӗн Националԓнӑҫсен Советне депутата суйлама пӗр сасӑпах палӑртрӗ, тет Йурйев йулташ. Залӑ Сталин тата Жданов йулташсене саламласа „урра“ кӑшкӑрнипе ҫӗнӗрен йанраса кайаҭ.

— „Пӗр пус укҫуна та пулаҭ хура куншӑн перекетлесе усра“ тетчӗҫ ӗлӗк ваттисем. Чӑнах та ун чухне ҫак халап тӗрӗс пулнӑ. Совет ҫӗршывӗнчи ӗҫхалӑхӗн хура кун ҫук. Пирӗн телейлӗ те савӑнӑҫлӑ пурнӑҫа болшевиксен партийӗ, Сталин йулташ тата унӑн соратникӗсем туса пачӗҫ,—тет спортинвентар фабрикӗнчен килнӗ представител Утехин йулташ.

Унтан Калмыков, Алексейев, Лаврентйев, Каткин, Леонов тата ытти йулташсем хӗрӳлӗ сӑмахсем тухса калаҫҫӗ. Вӗсем хӑйсен коллективӗсем В. М. Молотов, К. Е. Ворошилов, М. И. Калинин, Н. И. Йежов, Л. М. Каганович, А. А. Андрейев йулташсене ССР Союзӗн Аслӑ Советне депутата суйлама кандидата тӑратма йышӑнни ҫинчен калаҫҫӗ. Канашлу вӗсем пӗлтернине пысӑк хаваслӑхпа, тӑвӑллӑн алӑ ҫупнипе йышӑнаҭ.

Ҫавӑн пекех тата канашлу ЧАССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн председателне Л. С. Спасов йулташа, Сталинла саманара ӳссе ҫитӗннӗ совет патриочӗсене, республикӑн паллӑ ҫыннисене Короткова, Моисейевӑна, Харитоновӑна ССР Союзӗн Аслӑ Совет депутатне суйлама кандидата тӑратма рабочисен, колхозниксен пухувӗсем йышӑннӑ решенисене пысӑк хаваслӑхпа, тулли кӑмӑлпа йышӑнчӗ.

25 киле радио кӳртрӗҫ

Аслӑ Октӑбӗр революциччен Мартынкасси (Трак р.) тӗттӗм йал пулнӑ. Ӗҫхресченӗсем нушалӑ пурнӑҫпа асапланса пурӑннӑ.

Халӗ 20 ҫул хушшинче йал тӗпренех ҫӗнелчӗ. Тӗттӗм, пӗчӗк пӳртсем вырӑнне ҫӗнӗ, ҫутӑ пӳртсем шӑтса лараҫҫӗ. Акӑ нумайах та пулмасҭ К. Степанов колхозник пысӑк илемлӗ ҫурт лартрӗ. Ҫӗвӗ ҫӗлемели машинӑ илчӗ. Выԓӑх-чӗрлӗхсем нумай усраҭ.

Йалта Степанов пек колхозниксем нумай. 25 колхозник хӑйсен килӗсене радио кӳртрӗҫ. Мускавран, Хусантан, Шупашкартан тата ытти ҫӗртен те радио итлеҫҫӗ.

И. Ронтай.

1. ССР Союзӗ—социалисӑм ҫӗнтернӗ ҫӗршыв

Пурнӑҫа кӗнӗ ӗмӗт

Пысӑк та вӑйлӑ Советлӑ Социалисӑмлӑ Республикӑсен Союзӗ. Вӗҫӗхӗррисӗр унӑн ҫӗрӗсем. Унӑн пуйанлӑхӗсем иксӗлми. Нихӑҫан чакми те пысӑк унӑн хуҫалӑхлӑ тата вӑрҫӑлӑ хӑвачӗ.

Пирӗн чаплӑ тӑван ҫӗршывӑмӑр, социалисӑм ҫӗнтернӗ ҫӗршыв капиталисӑмлӑ ҫӗршывсем хушшинче кисренми чул ту йевӗрлӗ ҫӗкленсе тӑраҭ. Епӗр, Совет Союзӗн телейлӗ гражданӗсем, хамӑрӑн тӑван ҫӗршывӑмӑрпа савӑнатпӑр, унпа мухтанатпӑр: унта класлӑ пусмӑрлӑх ҫук, нацилӗ пусмӑрлӑх ҫук, ҫынна ҫын експлоатацилесси ҫук. Пирӗн тӑван ҫӗршывӑмӑр пуҫпулса тӑракан експлоататӑрлӑ класcене рабочисемпе хресченсем сирпӗтсе антарнӑ тата ӗҫҫынни ваԓԓи телейлӗ, культурӑлӑ, пур йенчен те ҫитеӗклӗ пурнӑҫ тунӑ тӗнчери пӗртен пӗр ҫӗршыв пулса тӑраҭ.

Пирӗн ҫӗршыв тӗнчери ытти пур ҫӗршывсенчен те тӗпренех уйрӑм тӑраҭ. Пирӗн ҫӗршывра чи хисепли, чи паҳи ӗҫпе пурӑнакан ҫын пулса тӑраҭ. Капиталисӑмлӑ тӗнчере вара чи хисеплӗ ҫынсем вырӑнӗнче — ӗҫлемесӗр пурӑнакан пуйансем, харампырсем — хӑйсем ӗҫлемесӗр, рабочисемпе хресченсем тӑвакан пуйанлӑха хӑйсем ваԓԓи илекенсем пулса тӑраҫҫӗ.

Мӗншӗн ку ҫапла пулса пыраҭ-ха? Мӗншӗн-ха буржуалӑ ҫӗршывсенче пурнӑҫ хуҫисем, рабочисемпе хресченсем тӑвакан продуктӑсемпе таварсен хуҫисем рабочисемпе хресченсем мар, капиталиссемпе помещиксем пулса тӑраҫҫӗ? Фабрикантсемпе шултӑра ҫӗр хуҫисем хӑйсем ӗҫлемеҫҫӗ ҫеҫ те мар, хӑйсен завочӗсемпе хуҫалӑхӗсем ӑстине, хӑйсен пуйанлӑхӗсене камсем тата мӗнле тунине те часах пӗлмеҫҫӗ вӗт-ха?

Ку ӗнтӗ капиталисӑмлӑ ҫӗршывсенче влаҫра експлоататӑрсем тӑнӑ пирки пулса пыраҭ. Ҫав ҫӗршывсенче капиталиссемпе помещиксем влаҫа анчах мар, заводсене, фабриксене, чукунҫулсене, поместйӗсене те тытса тӑраҫҫӗ. Ҫавӑнпа та, ҫав предприйатисенче мӗлйуншар ӗҫҫыннисем тертленсе ӗҫлесе тунӑ пуйанлӑхсем те вӗсенӗнех пулса тӑраҫҫӗ. Капиталисӑмлӑ тӗнчене мӗлйуншар, вуншар мӗлйун ӗҫҫыннисем ӗҫлемеле, харампырсен пӗчӗкҫӗ ушкӑнӗ ырлӑхра пурӑнмала тунӑ.

Совет влаҫӗ капиталисӑмлӑ тӗнчерен влаҫа ӗҫҫыннисем—рабочисемпе хресченсем—хӑйсен аллинче тытса тӑнипе уйрӑм тӑраҭ те ӗнтӗ. Пирӗн ҫӗршывра заводсем, фабрикӑсем, банксем тытса тӑракан уйрӑм хуҫасем, ҫӗрсемпе поместйӗсем тытса тӑракан уйрӑм хуҫасем ҫук.

Пур заводсемпе фабрикӑсем, пур шахтӑсем, пур чукунҫулсем, пур банксем, пур вӑрмансем, ҫӗрпе ҫӗр айӗнчи пурлӑхсем—пурте, советлӑ социалисӑмлӑ государствӑна организациленнӗ ӗҫҫыннисен хӑйсен пулса тӑраҫҫӗ. Ҫавӑнпа та заводсем, фабрикӑсем, совхозсем, колхозсем туса тӑракан йапаласем пурте ӗҫҫыннисен хӑйсен пурнӑҫне лайӑхлатнӑ ҫӗре, рабочисемпе хресченсен социалисӑмлӑ государствин пуйанлӑхӗпе хӑватлӑхне ӳстернӗ ҫӗре кайса тӑраҭ.

Пирӗн ҫӗршывра биржевиксем, капиталиссем, помещиксем ҫук, буржуалӑ государствӑсенчи пек рабочисемпе хресченсене пусмӑрласа ҫаратакан классем ҫук. Капиталисӑмла ҫӗршывсенче ӗҫҫыннисем тимӗр-тӑмӑр, ҫӗркӑмрӑкӗ, нефтӑ, машинӑсем, тумтир, тырӑпул, апат-ҫимӗҫ продуктисем мӗн чухлӗ нумайрах туса кӑлараҫҫӗ, капиталиссемпе помещиксем ҫавӑн чухлӗ намайрах пуйса пыраҫҫӗ. Рабочисемпе хресченсем вара ӗлӗкхи пекех выҫӑ лараҫҫӗ, нуша кураҫҫӗ кӑна та мар, ҫуллен ытларах та ытларах чуханланса пыраҫҫӗ, вӗсен нушисемпе асапӗсем ӳссех пыраҫҫӗ. Совет ҫӗршывӗнче рабочисемпе хресченсем металл, машинӑ тӗрлӗрен таварсем, ҫӗрмамӑкӗ, йӗтӗн, тырпулӑ тата ыт. апатҫимӗҫ продуктисем мӗн чухлӗ ытларах туса кӑлараҫҫӗ, ҫавӑн чухлӗ пуйанланса та вӑйланса пыраҭ пирӗн ҫӗршыв, ҫавӑн чухлӗ лайӑхланса, пурлӑхланса пыраҭ ӗҫҫыннисен пурнӑҫӗ.

Буржуалӑ ҫӗршывсенче капиталиссемпе помещиксем хӑйсем ваԓԓи вӑрӑ-хурахла туртса илсе тӑракан хаклӑлӑхсемпе ырлӑхсем пирте рабочисемпе хресченсен хӑйсен аллине кайса тӑраҫҫӗ. Пирӗн ҫӗршывра пурнӑҫ хуҫисем, рабочисем тӑвакан пуйанлӑхсен хуҫисем ӗҫҫыннисем хӑйсем пулса тӑраҫҫӗ. ССР Союзӗнче експлоататӑрсен класӗсем ҫук, апла пулсан, експлоатациленекен классем те ҫук. Капиталиссемпе помещиксен пусмӑрӗнчен хӑтӑлнӑ рабочисемпе хресченсем ССР Союзӗнче етемлӗх историнче пирвайхи хут хӑйсен пурнӑҫне тӑвакансем пулса тӑчӗҫ. Ҫавӑнпа та ҫав пурнӑҫа вӗсем ҫутӑ, савӑнӑҫлӑ, телейлӗ тӑваҫҫӗ.

Рабочи клас ӗҫхресченӗсемпе союзӑ тытса тӑрӑшса ӗҫленипе пирӗн ҫӗршывра ӗҫпе пурӑнакан етемлӗхӗн чи лайӑх представителӗсем ҫӗршер ҫул хушши ӗмӗтленсе тӑнӑ обшчествӑлӑ йӗрке тунӑ.

Пуйаннисемпе чухӑннисем пулман, пусмӑрлакансемпе пусмӑрта пурӑнакансем пулман, хуҫасемпе тара кӗрӗшсе ӗҫлекен тарҫӑсем пулман обшчествӑ тӑвасси ҫинчен—ун ҫинчен чи лайӑх ҫынсен нумай ӑрӑвӗсем ӗмӗтленнӗ, уншӑн тӑрӑшнӑ. Уншӑн пӗтӗм тӗнчери ӗҫҫыннисем кӗрешнӗ. Ӗҫҫынни массисен ҫав тахҫанхи ӗмӗтне пирӗн ҫӗршывра кӑна халӗ пурнӑҫа кӗртрӗмӗр—социалисӑм турӑмӑр.

ССР Союзӗ тӗнчере—социалисӑм ҫӗнтернӗ пӗртен-пӗр ҫӗршыв.

Совет хуҫалӑхӗн никӗсӗ—социалисӑмла харпӑрлӑх

ССР Союзӗнче производствӑ хатӗрӗсемпе орудийӗсем уйрӑм харпӑрлӑх пулнине пӗтернӗ. Пӗртен-пӗр пуҫпулса тӑракан харпӑрлӑх хаԓ ӗнтӗ пирӗн обшчествӑлӑ, социалисӑмлӑ харпӑрлӑх пулса тӑраҭ: заводсем, машинӑсем, паровозсем, йалхуҫалӑхӗнчи пӗтӗм тӗп ӗҫхатӗрӗсем, производствӑн пӗтӗм тӗп хатӗрӗсем хаԓ ӗнтӗ уйрӑм хуҫасен мар, социалисӑмлӑ государствӑн, йе колхозсен, кооперативлӑ организацисен харпӑрлӑхӗ пулса тӑраҫҫӗ.

Ҫӗнӗ обшчествӑлӑ йӗркен—социалисӑмлӑ йӗркен никӗсӗ — социалисӑмлӑ харпӑрлӑх пулса тӑраҭ. Ӑна пирӗн ҫӗршыври рабочи класпа хресченсем коммунисен болшевикла партийӗ йертсе пынипе тунӑ.

Капиталисӑмлӑ йӗркен никӗсӗ—уйрӑм харпӑрлӑх пулса тӑраҭ. Вӑл ӗҫҫыннисене експлоатацилемели тата пусмӑрламали ҫӑлкуҫӗ пулса тӑраҭ. Буржуалӑ ҫӗршывсенчи государствӑ йӗрки капиталиссемпе помещиксен харпӑрлӑхне, вӗсен експлоататӑрла интересӗсемпе привилегисене полицилӗ режимӑн пӗтӗм тискер вӑйӗпе сыхласа тӑраҭ. Совет йӗрки, социалисӑм йӗрки, социалисӑмлӑ харпӑрлӑха пур майсемпе те сыхласа тӑраҭ, мӗншӗн тесен вӑл Совет йӗркин таса та никам тӗкӗнмеле мар никӗсӗ пулса тӑраҭ, тӑван ҫӗршывӑмӑрӑн пуйанлӑх хӑвачӗн ҫӑлкуҫӗ, пур ӗҫҫыннисен пуйан та културӑлӑ пурнӑҫӗн ҫӑлкуҫӗ пулса тӑраҭ. Обшчествӑлӑ, социалисӑмлӑ харпӑрлӑх — хамӑрӑн совет обшчествин хӑватлӑ никӗсӗ пулса тӑраҭ, вӑл капиталисӑмӑн тискер инкекӗсене пӗлмесҭ.

Пирӗн обшчествӑ никӗсӗ—социалисӑмлӑ харпӑрлӑх; пирте капиталиссем ҫук, апла пулсан, уйрӑм хуҫасем хушшинче рынӑксемшӗн пыракан кӗрешӳ те ҫук, конкуренци те ҫук, производствӑ анархийӗпе йӗркесӗрлӗхӗ те ҫук, кризиссем те ҫук. Совет хуҫалӑхӗ планлӑ хуҫалӑх, организациленӗ хуҫалӑх: халӑх хуҫалӑхӗн пур отраслисене те Совет влаҫӗ йертсе пыраҭ, ӑна пӗр план тӑрӑх туса аталантарса пыраҭ.

Рынӑксемшӗн пыракан кӗрешӳ, конкуренци тата кризиссем ҫук совет хуҫалӑхӗн хӑвӑрттӑн ӳсе пыма пысӑк майсем пур. Капиталисӑмлӑ хуҫалӑх конкурентлӑ кӗрешӳре пӗтерекен, харампырсем—капиталиссемпе помещиксем—хӑйсен аскӑнчӑк пурнӑҫӗнче пӗтерсе пыракан пурлӑхсем совет йӗрки чухне хуҫалӑхра хӑйӗнче усранса тӑраҫҫӗ, социалисӑм ҫӗршывӗнчи обшчествӑлӑ пуйанлӑх ӳснӗ ҫӗре кайаҫҫӗ. Социалисӑм ҫӗршывӗнчи заводсемпе уйхирсенче експлоатацирен хӑтӑлнӑ ҫынсем ӗҫлени те ҫав пуйанлӑха ӳсме пулӑшаҭ. Вӗсен ӗҫӗ хаваслӑ ӗҫ, ҫавӑнпа та тухӑҫлӑ ӗҫ. Ҫавӑнпа та социалисӑмлӑ хуҫалӑх капиталисӑмлӑ хуҫалӑх ӳсме пултарайман хӑвӑртлӑхпа аталанса пыраҭ. Ҫавӑнпа социалисӑмлӑ хуҫалӑх массӑсен пурнӑҫне, вӗсен пултарулӑхне тӑтӑшах лайӑхлатса вӑйлатса пыраҭ.

Ҫӗнӗ обшчествӑлӑ йӗркене пирӗн ҫӗршывра рабочисемпе хресченсем, болшевиксен партийӗ, ЛЕНИН—СТАЛИН партийӗ йертсе пынипе, тунӑ. Патша влаҫне, капиталиссемпе помещиксем пуҫпулса тӑнине сирпӗтсе антарассишӗн рабочисемпе хресченсем тунӑ кӗрешӳ йывӑр та хӗн пулнӑ. Совет влаҫӗ ҫӗнтерӗвӗшӗн, ӑна ҫирӗплетессишӗн пынӑ кӗрешӳре рабочисемпе хресченсем нумайӗшӗ хӑйсен пуҫӗсене хучӗҫ. Хамӑр ҫӗршыва кайа йулнӑ ҫӗршывран малта пыракан ҫӗршыв тӑвассишӗн кӗрешнӗ чухне, хамӑр хуҫалӑха ӳстерсе социалисӑмлӑ вӑйлӑ хуҫалӑх тунӑ чухне, рабочисемпе хресченсем нумай йывӑрлӑхсем витӗр тухрӗҫ.

Рабочисемпе хресченсем социалисӑмшӑн пынӑ ҫав кӗрешӳсенче хӑйсене болшевикла парти йертсе пынипе, парти пуҫӗнче аслӑ тата нимӗнрен хӑраман паттӑр ҫулпуҫсем ЛЕНИНПА СТАЛИН тӑнине пула ҫӗнтерчӗҫ.

Совет ҫӗршывӗ, унӑн ҫутҫанталӑкӗ тата халӑхӗ

ССР Союзӗнче социалисӑм ҫӗнтерни ҫӗр чӑмӑрӗн улттӑмӗш пайӗнче социалисӑм ҫӗнтернине пӗлтерет. Совет халӑхӗсен аслӑ ҫемйе йышӗ пулса тӑракан 170 мӗлйунлӑ халӑх ӗнтӗ социалисӑм условийӗсенче пурӑнаҭ, класлӑ тата нацилӗ пусмӑра пӗлмесҭ. Арктикӑн пӑрлӑ вырӑнӗсенчен пуҫласа Туркменин вӗри хӑйӑрӗсем патне ҫити, Балтӑк тинӗсӗ ҫыранӗсенчен пуҫласа Лӑпкӑ океан ҫыранӗсем патне ҫити—Совет ҫӗрӗнче пур ҫӗрте те хаԓ аслӑ социалисӑмлӑ стройкӑ пыраҭ.

Мӗнле-ха вӑл пирӗн ҫӗршыв?

Пирӗн ҫӗршыв тӗнчери пур ҫӗршывсенчен те чи пысӑкки. Вӑл 21 мӗлйун тваткӑл километр ҫӗр йышӑнса тӑраҭ. Ҫакӑ вӑл ҫӗр чӑмӑрӗ ҫинчи типӗ ҫӗрсен улттӑмӗш пайне йахӑн пулса тӑраҭ. Пирӗн Союз Америкӑри Пӗрлешӳлӗ Штат-

„Пирӗн революци капиталисӑмӑн сӑнчӑрӗсене ҫӗмӗрсе, халӑха ирӗке кӑларнӑ кӑна мар, тата халӑха пуйӑн пурӑнма материаллӑ условисем пама ӗлкӗрнӗ пӗртен пӗр революци пулать. Ҫакӑнта пирӗн революцин вӑйӗпе никам ҫӗнейми хӑвачӗ“ (Сталин)

ПСК(б)П Тӗп Комитечӗ Октябӗрти Социалисӑмла Аслӑ революци 20 ҫул тултарнине уявласа иртерме панӑ лозунгсенчен

Хальхипе ӗлӗкхи ҫинчен

Хурӑн Кӑкшӑм йалӗ кукӑр-макӑр авкаланса йухакан Ҫавал шывӗ тӑрӑх вырнаҫса ларнӑ. Йалӑн ҫурҫӗр йенче вӗҫӗхӗррисӗр тӳрем улӑх сарӑлса выртать. Илемлӗ, пуйӑн вырӑн. Анчах, ӗлӗк, совет самани пуҫланиччен ҫак илемлӗ вырӑнсемпе Ластухин, Смирнов, Хӑвати Хветӗрӗ кулаксем ҫеҫ усӑ курса пурӑннӑ.

Чухӑн хресченсем кулаксене пӑхӑнса, вӗсен пусмӑрӗ айӗнче асапланнӑ. Ластухин Йӑванӗ патне арман авӑртма пырас пулсан, йаланах арман хуҫине ӗҫтерме ерех илсе пымала пулнӑ. Усламҫӑ Йакӑнатпа Хӑвати Хветӗрӗ халӑх йунне ӗҫсе самӑрланса пурӑннӑ.

Ластухинӑн ывӑлӗсем ҫынсенчен мӑшкӑлама йуратнӑ. Вӗсем чухӑн ҫынсен ачисене курсанах: „Ей, ҫӑпата!“—тесе кулнӑ. Чухӑнсен ачисем ҫав куштансенчен пӑрӑнса, пуҫӗсене ҫӗреле чиксе иртсе кайнӑ. Ҫапах та хӑйсен ӑшӗнче:

—Сирӗншӗн анчах хӗвел пӑхмасть, пирӗншӗн те хӑҫан та пулин уйав ҫитӗ-ха!—тесе шухӑшланӑ.

Хӗрачасем йалтан тухмасӑр пурӑннӑ. Вӗсен мӗн пур вӑхӑчӗ ӗҫре иртнӗ. Хӗллесенче пӗр-пӗрин патне ларма ҫӳренӗ. Унта та пулин ӳсӗр куштан качӑсем пырса, чухӑн ҫын хӗрӗсенчен мӑшкӑланӑ.

Йалта шкул пулнӑ. Чухӑн ҫын ачисене кунта та хӗсӗк пурнӑҫ тивнӗ, „законбожисене“ кӑшт пӗлмесенех ачасене хӑлхаран туртнӑ, сӑмсаран йун тухиччен хӗненӗ. Кӑкшӑмра чиркӳ лартиччен шкула Сӑкӑт пупӗ „пӑхса“ тӑнӑ. Ачасем „законбожине“ йе хӑшпӗр чиркӳ йуррине пӗлмесен, вӗсене чӗркуҫҫипе тимӗр пӑрҫа ҫине тӑратнӑ. Ҫавӑнпа ачасем чылайӗшӗсем шкула ҫӳреме пӑрахнӑ. Ҫапла пулнӑ ӗлӗк, Октябӗр революци пуличчен.

Социалисӑмла революци Хурӑн Кӑкшӑм хресченӗсене пуйӑн та культурӑллӑ пурнӑҫ ҫулӗ ҫине кӑларчӗ. Чухӑнпа вӑтам хресчен хуҫалӑхӗсем пуппа йалти пуйансен пусмӑрӗ айӗнчен тухса, ирӗклӗ, колхозлӑ пурнӑҫ турӗҫ. Ленин—Сталин партийӗ йертсе пынипе халӗ кашни колхозник ҫемйи пуйӑн та культурӑллӑ пурнӑҫпа пурӑнма пуҫларӗ.

Йал сӑн-сӑпачӗ кунран кун улшӑнса, ҫӗнелсе, культурланса пырать. Ӗлӗк пӗтӗм йалӗпе те хутпӗлекеннисем 10—12 ҫын (вӗсем те пуйансем) пулнӑ пулсан, халӗ кунта хут пӗлменнисем ҫук. Ун вырӑнне йалта 9 учитӗл, ку шутран ҫиччӗшӗ туллимар вӑтам шкулта вӗрентеҫҫӗ. Хурӑн Кӑкшӑм йалӗнченех пӗр профессӑр тухнӑ. Тата ытти пысӑкрах вырӑнсенче 13 ҫын ӗҫлет. Аслӑ шкулсенче вӗренекенсем 4 ҫын, вӑтам шкулсенче вӗренекенсем 12 ҫын. Йалӗпе илсен, туллимар вӑтам шкула вӗренсе пӗтернисем 45 процента йахӑн шутланаҫҫӗ. Йалта пуҫламӗш шкул пур. Унта ҫулсерен 40—50 ача вӗренсе тухать. Вӗсем хамӑрӑн тӑван ҫӗршывшӑн хаклӑ ҫынсем пулма вӗренеҫҫӗ.

Ӗлӗкрех йалта пӗтӗм ӗҫхресченӗсенчен ҫурри ытла хура пӳртсенче нушаланса пурӑннӑ, а халӗ кашни колхозник ҫутӑ, таса, пысӑк ҫуртра пурӑнать.

Йалти „Красноармеец“ колхоз кӑҫал хӑйӗн уйхирӗсенчен пысӑк тупӑш пухса кӗчӗ. Пайанхи кун тӗлне натшалӑх умӗнчи обйазателствӑсене пӗтӗмпех парса татнӑ. Ҫак кунсенчех колхоз тупӑша ӗҫкунӗсемпе колхозниксене валеҫсе парать. Кашни ӗҫкунӗ пуҫне кунта 8 килограм тӗштырӑ тивет. Ластухин кулакӑн паровикӗ халӗ колхоз аллинче.

Колхоз ҫамрӑкӗсем ӗлӗкхи пек хӑйсен хаваслӑхне ӗҫкӗсенче шырамаҫҫӗ. Йалта вӗсем халӗ кашни ернерех савӑнӑҫлӑ кӑҫсем, спектакльсем туса иртереҫҫӗ. Час-часах киносем кураҫҫӗ. Колхоз кӑҫал ҫамрӑксене пысӑк клуб туса пӗтерсе парать.

Хурӑн Кӑкшӑм йалӗ Октябӗрти Аслӑ Социалисӑмла революцин ХХ-мӗш уйавне нихӑҫан пулман пысӑк ӳсӗмсемпе савӑнӑҫлӑн кӗтсе илет.

Ҫамрӑксем уйав кӑҫӗнче спектакль лартса параҫҫӗ, колхозниксен хорӗ ҫӗнӗ йурӑсемпе тухать, ачасем тӗрлӗрен спорт вӑййисем хатӗрлеҫҫӗ. Колхоз хӑйӗн стахановцисемпе ударникӗсене уйав кунне чаплӑ парнесем парса премилет.

Ст. Улангай.

Ҫӗнӗ ача сачӗ

Шупашкарта Калинин йачӗпе тӑракан урамра ача сачӗ валли ҫӗнӗрен пысӑк йӑвӑҫ ҫурт лартрӗҫ. Вӑл ҫурта тума 100 пин тенкӗ ытла укҫа тухнӑ. Ҫурт ӑшчиккисем ҫав тери илемлӗ. Урайӗсене сӑрланӑ. Чӳречисем пысӑк. Темиҫе пӳлӗм тунӑ: тумтирсене хывмали, выльамали, ӗҫлемелли, сывӑрмали пӳлӗмсем, пысӑк зал, хӗрлӗ кӗтес т. ыт. пур.

Октябӗрӗн 29-мӗшӗнче ача сачӗ ӗҫлеме тытӑнчӗ. Унта мӗн пурӗ 75 ача ҫӳремелле. Халӗ 30 ача ытла пухӑннӑ. Руководительницӑсем ҫителӗклӗ. Вӗсем пурте ку тӗлӗшпе йатарласа шкулсенчен вӗренсе тухнӑ.

Ачасем питӗ хаваслӑ. Вӗсене лайӑх ҫитереҫҫӗ. Выльамали теттесем нумай. Тата вӗсене пурне те пӗр пек кӑвак халатсем тӑхӑнтартнӑ.

В. Андрейева.

Уйав умӗн

Ошосдорта ӗҫлекенсем, Социалисӑмла Аслӑ Октябӗр революцийӗ 20 ҫул тултарнӑ уйава кӗтсе илнӗ май, 20 ҫул хушшинче пулнӑ ҫитӗнӳсем ҫинчен часчасах политикӑлла калаҫусем туса иртереҫҫӗ. Пайанхи кунччен пурӗ 5 калаҫу пулса иртнӗ.

Уйава хатӗрленес тӗлӗшпе хӗрӳлӗ ӗҫ пырать. Пӗрисем ҫулйӗр строителстви ӳсӗмне кӑтартса диаграммӑсем тӑваҫҫӗ. Хӑшпӗрисем стена хаҫат кӑларма хатӗрленеҫҫӗ, лозунгсем, плакатсем ҫыраҫҫӗ, хӗрлӗ кӗтесе капӑрлатаҫҫӗ.

Нойабӗрӗн 8-мӗшӗнче пионерсен утренникӗ пулмала. Нойабӗрӗн 5-мӗшӗнче каҫхине хисеплӗ лару, ун хыҫҫӑн харпӑрхӑй пултарулӑхне кӑтартакан вечӗр туса ирттерме палӑртнӑ.

Халь Осоавиахим членӗсем ворошиловла тӗл пеме вӗренеҫҫӗ.

Е. Карташов.

Суйлав комиҫҫи членӗсем—чи хисеплӗ ҫынсем

ВӐРНАР. Кӑмаш йалсоветӗнче ССР Союзӗн Аслӑ Советне депутатсене суйлас тӗлӗшпе пӗр суйлав участки тунӑ. Суйлавҫӑсен спискине туса пӗтернӗ. Суйлав хӑш йалта пулмаллине те палӑртса хунӑ. Суйлав комиҫҫи членӗсене йалсоветӗнчи, колхозсенчи чи лайӑх ӗҫлекен ҫынсене уйӑрнӑ. Алексейев Данил—колхоз бригадирӗ, вӑлах комсомол организатӑрӗ пулса ӗҫлет. Унӑн бригади пур ӗҫре те ытти бригадӑсенчен малта пырать. Вӑл кӑҫал, агротехникӑна лайӑх пурнӑҫласа пынипе, минераллӑ удобренисемпе ҫителӗклӗ таран усӑ курнипе, вӑйлӑ тырпул туса илчӗ. Кашни гектартан вӑтам шутпа 19,70 центнер, уйрӑм гектарсенчен 25—27 центнер таран тӗштырӑ тухнӑ. Халӗ Алексейев бригади ҫитес ҫулхи вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешет. Ҫав тӗлӗшпе ырашпа тулӑна вӑхӑтра акса хӑварнӑ.

Петров Павел—Кӑмашри Сталин йачӗпе тӑракан колхоз бригадирӗ. Кашни гектартан 20 центнер тӗштырӑ туса илчӗ.

Петровпа Алексейев бригадирсем йаланах ӗҫкунӗсене вӑхӑтра ҫырса пыраҫҫӗ. Пӗр ӗҫкунӗ те ҫухатмаҫҫӗ. Ҫавӑнпа та вӗсене колхозниксем йуратаҫҫӗ, лайӑх ӗҫленӗшӗн мухтаҫҫӗ.

Суйлав участки членӗсем—Михайлов Арсентийпа Гаврилов Арсентий—иккӗшӗ те учителсем, паллӑ ҫынсем, вӗсене пурне те колхозниксем хисеплеҫҫӗ, йуратаҫҫӗ. Вӗсем колхозниксене ССР Союзӗн Аслӑ Советне суйламалли Положенийе тӗплӗн ӑнлантарса параҫҫӗ.

Ник. Козлов.

Ҫӗмӗрле тумланать

ҪӖМӖРЛЕ (хамӑр корр.). Октябӗр уйавӗ ҫывхарса ҫитрӗ. Халӗ пур предприйатисемпе учреждениссенче те уйава хатӗрленесси пысӑк хастарлӑхпа пырать.

С. П. Петров йулташ йачӗпе тӑракан комбинатра пур цехсенче те Октябӗр революцийӗ 20 ҫул тултарнӑ уйав ҫинчен 3-шер калаҫу туса иртернӗ. Калаҫусене партипе профсойуз организацийӗсем уйӑрнӑ вулавҫӑсемпе агитатӑрсем иртереҫҫӗ.

Производствӑ кӑтартӑвӗсем ҫинчен калакан диаграммӑсемпе тата плакатсемпе пӗтӗм Ҫӗмӗрле капӑрланать. Рабочисем хӑйсем пурӑнакан поҫолкӑна илемлетеҫҫӗ. Кашни ҫурт таврашӗнчи ҫуп-ҫапсене шӑлса тасатать, комнатӑсене ҫӑваҫҫӗ, шуратаҫҫӗ тата лозунгсемпе плакатсемпе илемлетеҫҫӗ.

Чукунҫул ҫинчи рабочисем станцӑ ҫуртне халех илемлетсе лартнӑ. Лозунгсем, плакатсем, фанерӑ листи ҫине ӳкернӗ Ленин тата Сталин йулташ сӑнӗсене лартаҫҫӗ. Клубра уйав кунӗсенче выльаса пама пйесӑсем хатӗрлеҫҫӗ. Струнлӑ оркестр кашни кун репетицисем туса иртерет.

Куйбышев йулташ йачӗпе тӑракан вӑтам шкул уйав кунӗсенче 2 ачасен утренникӗ, икӗ спектакль лартма хатӗрленет. Ҫак шкулта вӗренекенсемех „Большевик“ завод клубӗнче концерт, физкультурӑ вӑййисем кӑтартма хатӗрленеҫҫӗ. Йатарласах стена хаҫачӗ кӑлараҫҫӗ. Шкул тӑрринче електричествӑ ҫуттипе курӑнса тӑракан картинӑсем тӑваҫҫӗ.

Нойабӗрӗн 6-мӗшӗ тӗлне Ҫӗмӗрле Аслӑ уйав тумӗпе тумланать. Ҫуртсем ҫийӗнче 10 ҫӗрте ытла електричествӑ лампӑчкисем ҫутатса тӑракан хӗрлӗ 5 кӗтеслӗ ҫӑлтӑрсем, лозунгсем т. ыт. ӳкерчӗксем пулаҫҫӗ.

Хар. Лисин.

Канаш-Шупашкар чукунҫул строителстви. ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: Котлован.

Цыганов фото-ӳкерчӗкӗ.

Парторганизацин агитацилӗ ӗҫӗ

(Шупашкарти спирт завочӗ)

Суйлав кунӗ тӗлне кашни рабочине, работницӑна, килхуҫи арӑмӗсене суйлав саккунне тӗплӗн пӗлсе тӑракан задачӑ лартнӑ Шупашкарти спирт завод ҫумӗнчи пуҫламӗш парторганизаци. Суйлав саккунне пухусенче ӑнлантарнӑ, калаҫусем иртернӗ, ӑна вӗренме 8 кружок организациленӗ. Килхуҫи арӑмӗсем валли уйрӑм кружок тунӑ.

Суйлав саккунне кружоксенче тӗплӗн ӑнланайман рабочисем, работницӑсем валли тепӗр хут уйрӑм кружок организациленӗ. Ку кружокра 30 ҫын вӗренет. Заводра тата хутла пӗлмен хӗрарӑмсем пур. Вӗсем, 11 ҫын, кашни кун икшер сехет шкулра уйрӑм вӗренеҫҫӗ.

Кружоксене коммуниссем йертсе пыраҫҫӗ. Агитатӑрсенчен Смелов йулташ лайӑх ӗҫлесе пырать. Вӑл икӗ кружока йертсе пырать. Заньатисем активлӑ иртеҫҫӗ.

Малтанхи вӑхӑтра рабочисем парторганизацине ыйтусемпе пыман. Рабочисене, работницӑсене, килхуҫи арӑмӗсене вӗрентме кружоксем организациленӗ хыҫҫӑн тӗрлӗ ҫӗнӗ ыйтусем тухса тӑчӗҫ. Вӗсем кашни ыйту ҫине ответ пама ыйтаҫҫӗ. Ҫакна шута илсе парторганизаци справачнӑй бӳро организациленӗ. Ку ӗҫе туса пыма 3 коммуниса хушнӑ. Халӗ парторганизаци бӳро ӗҫне урӑхлатнӑ, коммуниссене общежитисене ҫӳреме хушнӑ.

— Общежитисене ҫӳреме тытӑннӑ хыҫҫӑн ыйтусем нумайланчӗҫ,—тет Смелов агитатӑр. Мӗншӗн тесен агитатӑрсем рабочисен хватерсенче, ыйтусем ҫине ответсем параҫҫӗ ҫеҫ мар, калаҫусем те иртереҫҫӗ.

Работницӑсемпе килхуҫи арӑмӗсем нимрен ытла Карамзина работницӑн суйлав округӗнчи ӗҫӗпе интересленеҫҫӗ. Мӗншӗн интересленес мар-ха? Вӗсем вӗт ӑна суйлав округӗнче ӗҫлеме сӗннӗ! Халӗ Карамзина работницӑ Шупашкарти суйлав округӗнчи комиҫҫи членӗ. Кам вӑл Карамзина? Вӑл кӗленчесем ҫӑвакан цех бригадирӗ, стахановкӑ. Унӑн бригади производствӑ планне 130—140 проц. тултарса пырать. 30 ҫулхи хӗрарӑм, вӑл ӗлӗкхи вӑхӑтра хуҫасем патӗнче батрачкӑра пурӑннӑ пирки хутла та вӗренеймен пулнӑ.

5 ҫул кайарах завода ӗҫлеме кӗнӗ вӑхӑтра вӑл ҫынпа калаҫма та вӑтаннӑ. Халӗ—заводра чи активлӑ работницӑ, пухусенче тухса калать, хӗрарӑмсем хушшинче калаҫусем иртерет. Унтан та ытларах вӑл нойабӗрӗн 1-мӗшӗнче Шупашкар суйлав округӗн канашлӑвне уҫнӑ. Кун пек чаплӑ канашлӑва йертсе пырасси ҫинчен вӑл ӗлӗк тӗлленме те пултарман. Карамзина йулташ ӳсни куҫ умӗнчех. Вӑл сахал мар вӗренет.

Парторганизаци агитатӑрсене курсран вӗрентсе кӑларнӑ. Парторг Александров йулташ рабочисемпе калаҫусем иртерес умӗн, агитатӑрсене пухса канашлу иртерет. Ку канашлура заньатири ҫитменлӗхсем ҫинчен сӳтсе йаваҫҫӗ, малашнехи заньатине мӗнле иртермелли ҫинчен каласа параҫҫӗ. Агитатӑрсемпе канашлусем иртерни тата коммуниссем общежитисене ҫӳрени агитатӑрсен йӑнӑшӗсене ҫийӗнчех пӗтерме пулӑшать. Лукойанов агитатӑр: „пӗр бӳллетенне ик-виҫ ҫыншӑн та сасӑлама йурать“, тесе пӑтратса ӑнлантарнӑ. „Апла анчах мар, суйлавҫӑ бӳллетенре кӑтартнӑ кандидатсене хуратса хурса, хӑйӗнчен хушса ҫырма та пултарать“ тесе хушса хунӑ Пугин йулташ (завод директӑрӗ). Сӑмах майӗн каласан, Пугин йулташ кун пек йӑнӑшсене темиҫе те тунӑ. Вӑл йертсе пыракан кружок кайра пырать.

Парторганизаци Чувашская урамри килхуҫи арӑмӗсем хушшинче те ӗҫлет. Кунта икӗ кружок тунӑ. Заньатисем 5 кунта пулса пыраҫҫӗ. Кружоксен ӗҫӗсене Александров парторг хӑй тӗрӗслесе тӑрать.

Заводри рабочисем октябӗр революци кунӗ умӗнхи ӑмӑртува хутшӑннӑ хыҫҫӑн, ӗҫ лайӑхланма пуҫланни курӑнать. 1937 ҫулхи плана октябӗрӗн 23-мӗшне 100 проц. тултарнӑ.

Хальхи вӑхӑтра агитатӑрсем совет влаҫӗ 20 ҫул хушшинче тунӑ ҫитӗнӳсем ҫинчен калаҫусем иртереҫҫӗ.

П. Перлов.

Решени хыҫҫӑн решени, анчах ӗҫ пӗр вырӑнтах

ЙӖПРЕҪ. Сивӗ кунсем пуҫланачӗҫ. Кӗҫех йур та ҫӑвӗ. Ҫавӑнпа та выльӑхсене хӗл каҫарма хатӗрленесси хальхи вӑхӑтра пит ответлӑ задачӑ пулса тӑрать. Ҫӗнӗрен тума пуҫланӑ витесене ҫак кунсенчех туса пӗтермеле, йусавсӑррисене йусамала. Выльӑх-чӗрлӗхе хӗл каҫарма ҫителӗклӗ таран апат-ҫимӗҫ уйӑрса хатӗрлесе хумала. Ҫаксем пурте социалисӑмла выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес плана пурнӑҫлас ӗҫре татса паракан тӗп никӗс пулса тӑраҫҫӗ.

Анчах, йӗпреҫсем хӗллене пит начар хатӗрленеҫҫӗ. Райҫӗрӗҫ пайӗнче ӗҫлекенсем ку тӗлӗшпе тин ҫавӑрӑнкалама тытӑннӑ. Аслӑ зоотехник Михайлов колхозсем хӗллене мӗнле хатӗрленни ҫинчен тӗплӗн каласа пама та пултараймарӗ. Ытти зоотехниксем те (Федорова, Осипов) ҫавах. Ҫакӑнтан ӗнтӗ райҫӗрӗҫ пайӗ хӗллене хатӗрленессипе нимӗн те туманнине лайӑх куратпӑр.

Ҫӗрӗҫ пайӗнче ӗҫлекенсем йӑраланса ӗҫленине пула, хӑшпӗр колхозсем хӗллене ҫителӗклӗ хатӗрлевмен, выльӑх апачӗ хатӗрлемен, витесене йусаман. Чӑрӑшкассинчи „10 лет Октября“ колхозра 42 гектар ҫинче комбайнпа ҫапнӑ сӗлӗ уламне вӑхӑтра пухса лартманнипе ҫӗртсе йанӑ. Ҫитменнине тата сӗлӗ акнӑ ҫӗр ҫине клевӗр акнӑ пирки, шӑтса тухнӑ клевӗр та улӑм вырӑнне пӗтсе ларнӑ.

Клешкассинчи „Коминтерн“ колхоз правленийӗ (председателӗ Павлов) сысна ферми ҫинӗ ҫавӑрӑнса та пӑхмасть. 1934 ҫулта тума тытӑннӑ сысна витине халь те туса пӗтермеҫҫӗ. Фермӑри сыснасем вите ҫуккипе ӑҫта килчӗ унта выртса пурӑнаҫҫӗ. Упакассинчи „Победа“ колхозӗнче те ҫавнашкалах. Ӗнесене хупма вите ҫук.

Ҫавӑн пекех „Строитель“ колхозӗнче те ӗне витине 2 ҫул хушши тӑваҫҫӗ, халь те туса пӗтереймеҫҫӗ. „Искра“ колхозӗнче фермӑ валли вите тума производствӑллӑ планра кашни ҫул палӑртаҫҫӗ, анчах планра пӑхнипех иртерсе йараҫҫӗ.

Хӑшпӗр колхозсенче тата витесене йусас ӗҫе пуҫӑннӑ пулсан та, чӑсса пыраҫҫӗ, ӗҫе хӑвӑртлатмаҫҫӗ. Ун пек колхозсем „1-е Мая“, „Трактор“, „Большевик“.

Строителствӑ ӗҫне хӑвӑртлатас пирки райӗҫтӑвком президиумӗнче сахал мар калаҫнӑ. Ҫӗнӗрен тума тытӑннӑ витесене туса пӗтерес, киввисене йусас ӗҫӗн пӗрремӗш срукне ҫентябӗрӗн 15-мӗшне йышӑннӑ пулнӑ, вӑл срук пурнӑҫа кӗмен, иккӗмӗш срук—октябӗрӗн 1-мӗшӗччен пулнӑ, вӑл та пурнӑҫа кӗмен. Йулашкинчен вара октябӗрӗн 15-мӗшӗнче строителствӑпа ремонт ӗҫне пӗтӗмпех вӗҫлесе ситермеле тесе ҫирӗп решенийех йышӑннӑ. Анчах, вӑл решени те хут ҫинче ҫеҫ тӑрса йулнӑ. Ҫапла вара, йӗпреҫсем решени хыҫҫӑн решени йышӑнса вӑхӑта иртереҫҫӗ.

Д. Михайлов.

Колхоз хатӗрленет

ЙӖТӖРНЕ. Хучашри колхозра колхозниксемпе колхозницӑсен аслӑ пухуӗ пулса иртрӗ.

Пухура Октябӗр революци 20 ҫул тултарнине тата ССР Союзӗн Аслӑ Советне суйлас куна мӗнле кӗтсе илесси ҫинчен сӳтсе йаврӗҫ.

Колхозниксемпе колхозницӑсем Октябӗр революци 20 ҫул тултарнӑ уйава, ССР Союзӗн Аслӑ Советне суйламалли Положенине тӗплӗн вӗреннипе тата государствӑ умӗнчи парӑмсене парса татнипе кӗтсе илме пулчӗҫ.

Суйлав кун колхоз, пӗчӗк ачаллӑ хӗрарӑмсем суйлавран ан йулччӑр тесе, йаҫли организацилет.

М. Йемелйанов.

Чӑваш патшалӑх хорне тасатмала

Литературӑпа искусствӑ фронтӗнчи халӑх тӑшманӗсене нумайӗшне тӑрӑ шыв ҫине кӑларнӑ. Ҫапах та ку ӗҫе вӗҫне ҫитернӗ, тесе калама ҫук.

Сӑмахран, чӑваш патшалӑх хорне илер. Унта мӗн пурӗ 42 ҫын ӗҫлет. Вӗсенчен чылайӗшӗ пирӗншӗн йут ҫынсем.

Пайан кунччен хорта пуп хӗрӗсем, пуп пулнӑ ҫынсем тӑраҫҫӗ.

Ҫак пупсен ушкӑнне чӑваш патшалӑх хорӗн руководителӗ В. П. Воробйов хӳтелесе пурӑннӑ. Н. Д.

сенчен 2,5 хут пысӑкрах. Германирен 40 хут пысӑкрах. Пирӗн Хӗвелтухӑҫри чикӗре хӗвеланӑҫри чикӗринчен 9 сехет маларах хӗвел тухать. Курйерски пуйӑспа, кунне пиншер километр пырсан, хӗвелтухӑҫри чикӗрен хӗвеланӑҫри чикке ҫитме 10 тавлӑк каймала.

Пирӗн Союз Йевропӑпа Азин пӗрлешӳлӗ материкӑн ҫурҫӗрӗнче вырнаҫӑннӑ та, Йевропӑн хӗвелтухӑҫри ҫуррине, Азин ҫурҫӗрти пайӗн виҫҫӗмӗшне йышӑнса тӑрать.

Совет Союзӗн ҫӗрӗсем ҫурҫӗрте Ҫурҫӗрти Пӑрлӑ океана тухаҫҫӗ, хӗвелтухӑҫӗнче—Лӑпкӑ океана. Пирӗн хӗвеланӑҫӗнчи тата кӑнтӑрти чикӗсем, пӗтӗмпе тенӗ пекех, типҫӗрлӗ чикӗсем. Хӗвеланӑҫӗнчи чикӗсем Ҫурҫӗрте Баренц тинӗсӗнчен пуҫланса кӑнтӑрта Хура тинӗс патне пыраҫҫӗ.

Хӗвеланӑҫӗнче пирӗн кӳршӗсем ҫак государствӑсем пулса тӑраҫҫӗ (ҫурҫӗртен кӑнтӑрала илсен): Финляндии, Естони, Латви, Польша, Румыни.

Хура тинӗспе Каспий тинӗсӗ хушшинчи кӑнтӑрти чикӗсем пире Турципе Иранран уйӑрса тӑраҫҫӗ. Каспий тинӗсӗнчен хӗвелтухӑҫнелле Иран чиккисем тӑсӑлаҫҫӗ, унтан Афганистан чиккисем (унӑн хыҫӗнче Английӗн чи пысӑк колонийӗ—Инди выртать), вара Китай чиккисем, Монголипе Тува халӑх республикисен чиккисем выртаҫҫӗ.

Инҫетри Хӗвелтухӑҫӗнче Манчжури чиккисем тата Лӑпкӑ океан патӗнче Йапони колонийӗ Корейӑ чиккисем тӑсӑлаҫҫӗ. Кунсӑр пуҫне тата Йапонипе пирӗн хушӑра кӑнтӑр пайӗ Йапонин, ҫурҫӗр пайӗ—ССР Союзӗн пулса тӑракан Сахалин утравӗ ҫинче типӗҫӗрлӗ чикӗ пур.

Пирӗн ҫӗршыври ҫутҫанталӑк питӗ те нумай тӗрлӗ: унта Ҫурҫӗрти ӗмӗртен выртан пӑрсенчен пуҫланса, кӑнтӑрти ӗмӗрех йӗшӗрен субтропикӑллӑ ӳсентӑрансене ҫити, тинӗс танлӑхӗнчен айаларах выртакан лӑпамсенчен пуҫласа вӑйлӑ пӑрлӑхсем витӗннӗ пин ҫурӑ метӑр ҫӳлӗш тусем пур.

ССР Союзӗн пысӑк сӑрт тӳрчӗсем пур, вӗсем ҫинчен тӳлли йухакан, тӗнчере чи пысӑк тӳремлӗхсене пиншер километр касса йухакан шывсем пуҫланаҫҫӗ.

Ҫурҫӗрте, Ҫурҫӗрти Пӑрлӑ океан тӑрӑх хайар ҫанталӑклӑ, вӑрмансӑр, мӑкпа, вырӑнӗ-вырӑнӗпе тата сайра курӑкпа витӗннӗ тундрӑ тӑрӑхӗ тӑсӑлать. Унтан кӑнтӑр йенерех питӗ сарлака вӑрман тӑрӑхӗ тӑсӑлать. Вӑл вӑрман Ҫурҫӗр йенче—ҫын ҫӳреймй ҫӑра та пӗтӗмпе пекех хырлӑх, кӑнтӑр йенче—тӗрлӗрен йӑвӑҫсем ӳсекен вӑрман. Вӑрман тӑрӑхӗнчен кӑнтӑрала малтанах хураҫӗрлӗ, унтан Казахстанра тата Вӑтам Азире хӑйӑрлӑ пушӑ хирсем пулса кайакан типӗ ҫеҫенхирсем сарӑлса выртаҫҫӗ. Кӑнтӑрти чикӗ тӑрӑх ӗмӗр ирӗлмен йурлӑ тӳпелӗ ҫӳлӗ тусем тӑсӑлаҫҫӗ. Вӑтам Азири тусем таврашӗнче пушӑ хирсем хушшинче чечекленекен оазиссем вырнаҫӑннӑ, унта тӗрлӗ ӳсен-тӑрансем питӗ нумай, халӑх та питӗ нумай пурӑнать.

Хӑйӗн ҫутҫанталӑк пуйанлӑхӗсемпе, вӑрман пысӑкӗшӗпе тата хураҫӗрлӗ ҫеҫенхирсемпе ССР Союзӗ тӗнчере пӗрремӗш вырӑнта тӑрать.

Шыв вӑйӗ, нефтӗ, торф запасӗсем тӗлӗшпе те ССР Союзӗ тӗнчере пӗрремӗш вырӑн йышӑнса тӑрать. Ҫӗркӑмрӑк запасӗсем тӗлӗшпе ССР Союзӗ Америкӑри Пӗрлешӳлӗ Штатсенчен кӑна кайа, анчах Ҫурҫӗр Америкӑри Пӗрлешӳлӗ Штатсен ҫӗркӑмрӑкӗн пахалӑхӗ пирӗннинчен чылай кайра. Донбаспа Кузбас антрацичӗсем тӗнчере чи лайӑх кӑмрӑк вырӑнне шутланаҫҫӗ.

Пирӗн ҫӗршывӑн аслӑ ҫӗрӗсем ҫинче тӗнчере ҫӗр айӗнчи мӗн пур пуйанлӑхсен запасӗсем те ҫителӗклӗ.

Хура металлурги валли тимӗр (Украинӑри Кривой Рогра, Крымри Керчра, Уралта, Курск облаҫӗнче, Ҫӗпӗрте тата Инҫетри Хӗвелтухӑҫӗнче) пур, марганец (Украинӑри Никопольте, Грузири Чиатурта) пур. Тӗслӗ металлурги валли пӑхӑр, цинк, тӑхлан тата ытти тӗслӗ металлсем (Казахстанра, Вӑтам Азире, Уралта, Кавказра тата Инҫетри Хӗвелтухӑҫӗнче) пур.

Хими промышленнӑҫӗ валли пӗтӗм тӗнчипе паллӑ вырӑнта тӑракан миробилит запасӗсем (Кара-Бугаз-гол Каспий тинӗсӗ пырӗнче, Анат Атӑлта, Казахстанра, Йакутире), кали тӑварӗ (Уралти Соликамскра), аппатитсем (Кольски Ҫурутрав ҫинчи Хибинӑра) т. ыт. сырйо та пур.

Пирӗн ҫӗршывӑн ҫурт-йӗр тумалли тӗрлӗрен материалсем те: лайӑх йышши мрамӑр, цементлӑ тӑм, вута чӑтакан материалсем пӗтӗмӗшпех ҫителӗклӗ.

Кавказра тата Вӑтам Азире пирӗн ӑшша йуратакан культурӑсем: ҫӗрмамӑкӗ, чей тата кӑнтӑрти сырла-ҫимӗҫсем — мандаринсем, лимонсем ӳсеҫҫӗ.

Пирӗн тинӗссенче: Каспий тинӗсӗнче, Ҫурҫӗрте Кольски ҫурутрав сыранӗсем хӗрринче, Инҫетри Хӗвелтухӑҫӗнче, Камчаткӑ сыранӗсем хӗрринче пулӑ запасӗсем пысӑк.

Халӑх шучӗ тӗлӗшпе ССР Союзӗ Китайпа Англи колонийӗ Индирен кӑна кайарах вырӑнта. Ытти государствӑсенче пӗр Америкӑри Пӗрлешӳлӗ Штатсенче кӑна 100 мӗлйунран ытларах халӑх пурӑнать.

Анчах хальхи вӑхӑтра халӑх мӗнчухлӗ пулни ҫеҫ мар, унӑн ӳсӗмӗн хӑвӑртлӑхӗ те пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Патша Российӗнче ҫулталӑкра пин ҫын пуҫне 44 ҫын ҫуралнӑ, 27 ҫын вилнӗ, ҫапла вара пӗр пин ҫын пуҫне 17 ҫын хушӑнса пынӑ. Совет влаҫӗ вӑхӑтӗнче пин ҫын пуҫне 24 ҫын хушӑнса пырать. Капиталисӑмлӑ ҫӗршывсенче халӑх ӳссе пырасси ӗлӗк те пирӗннинчен кайа пулнӑ, анчах йулашки ҫулсенче вӑл тата 2—3 хут чакрӗ. Хальхи вӑхӑтра Хӗвеланӑҫ Йевропӑри патшалӑхсенче пӗтӗм халӑх шучӗ, пурне те пӗрле илсен, 390 мӗлйун ҫын шутланса тӑрать. Унта пӗр пин ҫын пуҫне 5 ҫынран ытла мар ӳсет, урӑхла каласан пирӗннинчен 5 хута йахӑн кайарах ӳсет. Совет республикисенчи столицӑсенче капиталисӑмлӑ патшалӑхсен столицисенчинчен халӑх 10—20 хут ытларах ӳссе пырать. Сталин йулташ, ССР Союзӗнче халӑх ҫулсерен Йевропӑри пӗр патшалӑх халӑхӗ чухлӗ, сӑмахран, Финляндийӗн чухлӗ, ӳссе пынине палӑртрӗ.

Промышленнӑҫ хӑвӑрттӑн ӳссе пынӑ май хула халӑхӗ пирте йал халӑхӗнчен чылай хӑвӑртрах ӳссе пырать. Хула халӑхӗ хисепӗн процентне, вӑрҫӑччен хипе танлаштарсан, 17-рен 25-ке ҫитрӗ. Шултӑра хуласем ӑраснах хӑвӑрт ӳссе пыраҫҫӗ.

Тӗнчери халӑхӑн 1/12 пайӗ пирӗн ҫӗршыва тивет. Пирӗн ҫӗршывра халӑх 1 тӑваткӑл километр лаптӑкра 8 ҫын пурӑнать. Пуринчен ытларах халӑх пирӗн ҫӗршывӑн Йевропӑри пайӗн кӑнтӑр-хӗвеланӑҫӗнче (Ленинград — Хусан — Саратов — Дон-ҫи — Ростов линийӗ тӑрӑх) пурӑнать. Унта пурӑнакан халӑх вӑтам шутран 5 хут йе тата та ытларах. Ҫӗпӗрте халӑх ҫӑрарах пурӑнакан вырӑн чукунҫул магистралӗ тӑрӑх. Вӑтам Азире, халӑх 1 тӑваткӑл километрта 200 ҫынна ҫити пурӑнакан оазиссемпе пӗрлех, тӑваткӑл километра пӗр ҫынран кайарах пурӑнакан пушӑ-хирлӗ тата сӑртлӑ вырӑнсем те пур.

Анчах инҫетри Ҫӗпӗр тайгинче те, Тянь-Шанӗн хайар ҫанталӑклӑ тӑвӗсем хушшинче те, Туркменийӗн шывсӑр пушӑ хирӗсенче те, Арктикӑри пӑрлӑ ҫӗрсем ҫинче те — пур ҫӗрте те социалисӑм тӑвас ӗҫ хастаррӑн та хӗрӳллӗн пырать.

Ҫак стройкӑ пынӑ май тӑван ҫӗршывӑмӑрӑн нихӑҫан иксӗлми пуйанлӑхӗсем тата та ӳссе пуйанланса пыраҫҫӗ, совет ҫыннисен, коммунисӑм строителӗсен сталинла чаплӑ ӑрӑвӗн таланчӗсемпе пултарулӑ вӑйӗсем ҫитӗнсе ӳссе пыраҫҫӗ. („Наша родина“ кӗнекерен)

Участкăри суйлав комиççи членĕсене суйлас ĕç çине ответсăрла пăхни

СМЕЛА, нойабĕрĕн 3-ш (ТАСС). Кийев облаçĕнчи Смела районĕнче участкăри суйлав комиççи членне суйлама кандитатсене нумай çĕрте общечествăлă организацисемпе ĕççыннисен общечествисем мар, йалтипе хулари советсен руководителĕсем палăртнă. Райĕçтăвком тата унăн председателĕ Федоренко йулташа лайăх пĕлеççĕ. Ку çитмест-ха, октăбĕрĕн 30 мĕшĕнче, райĕçтăвком президиумĕ комиççи советне çирĕплетнĕ чухне, райĕçтăвком телефон тăрăх йалсовет председателĕсене çитмен кандидатсене уйăрса пама, кайран вара, çирĕплетнĕ хыççăн, вĕсене общечествăлă организацисен пухăвĕсенче „йĕркелеме“ хушнă.

Тĕлĕнмелийех çук, участкăри суйлав комиççи членĕсене суйлас ĕç çине çакăн пек пăхнипе вĕсен составĕнче иккеленмеле тата йут çынсем пулнă. Çапла, Бузукот йалĕнчи участкăри суйлав комиççи председателĕн заместителне колхоз председателĕнчен общечествăлă укçа-тенкĕне салатса йанăшăн тата йалхуçалăх ертелĕн уставне пăснăшăн кăларнă Проценкона çирĕплетнĕ. Пĕр участкăри суйлав комиççи председателне государствăлă укçине хăй çумне чикнĕ Ластовиченкона çирĕплетнĕ. Участкăри суйлав комиççисен председателĕсене çирĕплетнисем хушшинче халăх тăшманĕсемпе çыхăну тытнăшăн выговор панă Йамполйская тата общечествăлă укçа-тенкĕне салатакан, ӳсĕр çапкаланчăк Олефиренко пулнă.

Винницăри тата Биробиджанри йеврей вăтам шкулĕсен пуçарăвĕ çумне хутшăнар

ССР Сойузĕн Тĕпĕçтăвкомĕн Национальăççен Совечĕн оргăнĕ „Дер Эмес“ çинче, çак çулти çентăбĕрĕн 27-мĕшĕнче, Винница хулинчи йеврейсен 3-мĕш вăтам шкулĕ (Украинсен ССР) тата Биробиджан хулинчи (йеврейсен автономлă облаçĕ) йеврейсен 2-мĕш вăтам шкулĕ социалисăмла ăмăрту чĕнӳвне пичетлесе кăларнă.

Çак чĕнӳре йеврейсен 3-мĕш вăтам шкулĕ хăйĕн çине татăклă обйазателствăсенче: пĕр класрах икĕ çул вĕренессине пĕтерме, пур предметсемпе те тата уйрăмăнах тăван чĕлхепе, литературăпа, ССР Сойузĕнчи халăхсен историйĕпе „отлично“ тата „хорошо“ вĕренме, шкулта коммунисла воспитани парассине пурнăçлама, вĕренекенсем хушшинче совет патриотисăмне — тăван çĕршыва йуратса партипе социалисăмла çĕршывăн тăшманĕсене курайманнине ӳстерессине йалана кĕртме, вĕренекенсен канăвне лайăх организацилеме, комсомолпа пионер организацисенче активлăн хутшăнса ĕçлеме пулнă.

Йеврейсен 3-мĕш вăтам шкулĕнчи учителсем кунпа пĕрлех большевисăма алла илме, хăйсен педагогикăла квалификацине пĕр майăх ӳстерсе пыма, ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама хатĕрленмелли политикăла пысăк кампанире, Сталинла Конституципе çĕнĕ суйлав саккунне халăха вĕрентес ĕçре партипе совет организацисене активлăн пулăшса пыма пулса хăйсем çине обйазателствăсем илнĕ.

Лайăх тата палăрса тăракан шкулсемпе учителсене йатарласа уйăрнă премипе фончĕсенчен премипамала тумала, тенĕ.

Пирĕн орденлă Чăваш республикинчи шкулсем Винницăрипе Биробиджанри йеврейсем çак паха пуçарувĕ çумне хутшăнмала.

Вĕренӳпе воспитани парас ĕçре татăклă тата кăтартулă тĕслĕхсемпе ответлемеле.

Районри хаçатсем çинче ăмăртса ĕçлекен лайăх учителсемпе шкулсем çинчен пĕрмайăх çутатса пымала.

Ĕлĕкхине аса илсен

— Епĕ унчухне çамрăк ача пулнă,—тесе пуçлат хăйĕн сăмахне Йершерти (Куславкка районĕ) 70 çулхи Николай Улйев колхозник.— Астăватăп: 1875 çулта пирĕн йалта пĕр Макар салтак çеç хутла пĕлеччĕ. Тепĕр 5—6 çултан виçтăватă çын вулама çырма вĕренчĕç.

1877 çулта пирĕн йалти Алексей Николайевич пĕр пĕчĕк сăмавар туйанчĕ. Йала пĕр-пĕр „чаплă“ çын килсен, ăна тӳрех сăмавар хуçи патне илсе кайаччĕç. Çав вăхăталах Иван Герасимов сехет илчĕ. Халăх сехетрен те тĕлĕнеччĕ. 1884 çулта Йершерти Çемук салтакпа Павел Шмелейев çĕвĕ çĕлемели машинă туйанчĕç, „Куç ӳкет“ тесе, çĕвĕ машинине нумайччен çынсене кăтартмасăр пурăнчĕç.

1868 çулта пирĕн йалти халăх киреметĕ ĕненсе пурăннă, чиркӳвĕ кайман. Халăх чиркӳве кайман пирки Селиван хуçа чиркӳ тума хăйĕн кирпĕчне панă. Халăх чиркӳ лартма йышăнман, укçа-тенкĕ тупăнман, мĕншĕн тесен халăх чухăн пурăннă.

Йалти çамрăксем мучи калавне тĕлĕнсе кайса итлеççĕ. Ĕлĕкхи Йершерпе хальхи Йершере танлаштарса пăхаççĕ.

Йершерте халь хут пĕлмен çын çук ĕнтĕ. Революци хыççăн 11 çын аслă шкулсенчен вĕренсе тухнă, хаЛь тата 4 çын вĕренет. Техникумсенче 14 ача, вăтам шкулсенче 9 ача, туллимар вăтам шкулта 80 ача вĕренеççĕ. Хĕрлĕ Çар комадирĕсемпе политрукĕсем 6 çын, 5 учител, 15 бухгалтĕр, 9 счетовод тата ытти специалиссем те чылай. Сăмаварсем, сехетсем, çĕвĕ çĕлемели машинăсем кашни килĕрех пур. Кашни колхозник хаçат çырăнса илет.

М. Семенов.

Производствăлă çĕкленӳ

Кавалри крахмал заводĕнчи (Вăрмар р.) рабочисемпе инженерла-техникла работниксем Аслă Октăбĕр уйавне производствăра пысăк ӳсĕмсем тунипе кĕтсе илеççĕ. Хальхи вăхăтра заводра плана 130—140 процентран кайа тултаракан бригадăсем, сменăсем çук. К. Михайлов бригади нормăна 180 процент тултарат.

Епĕр лайăх пĕлетпĕр,—тесе çыраççĕ заводри рабочисем хамăр республикри апат-çимĕç промышленнăçĕнчи рабочисемпе инженерла-техникла работниксем патне чĕнсе çырнă çырура.—Ку ӳсĕмсем пирĕншĕн виçе мар. Епĕр пĕлетпĕр: Чăваш республикĕнчи апат-çимĕç промышленнăçĕ иртнĕ 9 уйăх хушшинче çĕршыв тата халăх умĕнчĕ пысăк парăма кĕчĕ. Çакна пула ĕнтĕ çулталăкри планăн çуррине ытла 4-мĕш квартăлта тултарма тивет. Епĕр пĕлетпĕр: кăçалхи тухăçлă тырпул пире çулталăкри плана срукчен—ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали кун тĕлне тултарма май парат...

Заводри рабочисен коллективĕ хăйĕн умне çулталăк планне ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали кун тĕлне тултарас задачăна лартрĕ. Çакна пурнăçа кĕртесшĕн, стахановецсемпе пур рабочисем те тата инженерсемпе техниксем заводăн пĕтĕм вăйĕпе усă курассишĕн, лайăх пахалăхлă продукци кăларассишĕн, пӳр рабочисене те стахановла ĕçлеме вĕрентессишĕн хĕрӳлĕ кĕрешĕве тухрĕç. Вĕсем республикри апат-çимĕç предприйатисенчи пур рабочисене те хăйсем пек ĕçлеме чĕнеççĕ.

Суйлав Положенине вĕрентмеççĕ

(Колхозник çырăвĕ)

Йермошкăри Калинин йачĕпĕ тăракан колхозра агитмассăлă ĕçе йĕркелемен. Хамăрăн тăван çĕршывра пулса пыракан çĕнтерӳсене, тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсене, Сталинла Конституци статйисене тата „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенине“ йалти ĕççыннисене ăнлантарса памаççĕ. Вăл ыйтусене колхозниксем çитĕ пĕлесшĕн. Йалсовечĕ, комсомол комитечĕ, вулав çурчĕ, учителсем колхозниксем хушшинче агитацилетата политикла-массăлă ĕçпе нимĕн те интересленмеççĕ. Учител Григорйев Иван икĕ çул хушши ĕнтĕ пĕр хут та колхозниксемпе калаçман.

Хальхи вăхăтра пĕтĕм ССР Сойузĕнчи ĕççыннисем Аслă Совета суйлама хатĕрленеççĕ. Суйлав Положенине вĕренеççĕ. Анчах ку ĕç пирĕн колхозра бригадăсенче кружоксем организациленинчен малала кайман. Вулав çурчĕн пуçлăхĕ Чернов, учител Григорйев йулташсене колхоз бригадисем çумне çирĕплетнĕ. Вĕсем çак тарана çитсе те пĕр заньати иртермен. Вулав çуртĕнчи хаçат-журналсене колхозниксем сайра хутра кăна курса вулаççĕ. Колхозра икĕ çĕр хуçалăх, вĕсенчен çурри те хаçатсем çырăнса илмеççĕ. А. Павлов колхозри почтальйон хаçат-журнал сарассипе тăрăшса ĕçлемест, хаçат çырăнса илекенсене вăхăтра çитерсе памаст. Колхозра стена хаçачĕ тухмаст.

А. В. Владимиров.

Ĕçри прорыва хăвăрт пĕтермеле

Ĕнер, 12 сехетре кăнтăрла, Чăвашполиграфтрестăн пĕррĕмĕш типографинчи рабочисем, служăшчисем, инженерла-техникла работниксем пуху туса иртерчĕç. Пуху металлургсен кăçалхи октăбĕрĕн 26—29 мĕшĕсенче пулса иртнĕ канашлувĕ чĕнсе каланине, металлургипе кăмрăк промышленнăçĕнчи йертсе пыракан работниксене тата стахановецсене партипе правителствă руководителĕсем Кремльре йышăннă чухне Сталин йулташ каланă сăмаха сӳтсе-йаврĕ.

Металлургсен канашлувĕ чĕнсе каланинче металлурги, кокс, огнеупор тата руда промышленнăçĕнчи çитменлĕхсем çинчен кăтартса пани типографине пĕтĕмĕшпех те тӳрех килсе тĕкĕнет. Типографинчи хуçайственниксем, инженерла-техникла, работниксем тата общечествăлă организацисем парти Тĕпкомĕн Пленумĕ (1935 ç. декабĕр) стахановла йухăм çинчен йышăннă решенийĕсене тата парти Тĕпкомĕн кăçалхи февральпе мартра пулса иртнĕ Пленумĕнче Сталин йулташ йапон-нимĕç-троцкисла-бухаринла шпионсен сăтăрла ĕçĕсен йулашкийĕсене пĕтерме кирли çинчен кăтартса панисене тивĕçлĕн пурнăçа кĕртме тытăнман. Типографи кăçалхи 10 уйăх программине 68,1 процент, октăбĕр планне 91,1 проц. кăна тултарчĕ. Стахановла йухăма йертсе пыни çук, графикпа ĕçлемест. Ĕçре халь те простойсем нумай пулаççĕ. Сырйо çитмен пирки стереотип цехĕ плана нихăçан та 25—30 процентран ытла тултараймаст. Цинкографи цехĕ начар ĕçлет.

Металлургсен канашлувĕ чĕнсе каланине пурнăçа кĕртни пĕтĕм промышленнăçа çĕклентерсе йамапулăшмала. Пирĕн сырйосемпе полуфабрикатсене çителĕклĕ тупмала, рабочи ĕçлекен вырăна лайăх организацилемеле, графика çирĕп пăхăнса пымала, социалисăмлă ăмăрту договорĕсене тумала, ĕç дисциплинине хăпартмала.

Пухура набор цехĕн инструктăрĕ Круглов тата литографи цехĕн бригадирĕ Багильдинский йулташсем тухса каларĕç.

Вĕсем типографинче ĕç дисциплинин арканса кайнине палăртса, стахановла ĕçлеме, металлургсен канашлувĕ чĕнсе каланине пурнăçа кĕртме чĕнчĕç.

Пуху пĕр саслăн резольуци йышăнчĕ. Резольуципе рабочисем 1937 çулăн программине йалтах тата ытлашшипех пурнăçа кĕртме пулăшакан татăклă ĕçсем туса иртерме йышăнчĕç.

Машинă-трактор станцисем 1937 çулти октăбĕрĕн 31-мĕшне тракторсемпе мĕнле ĕçленине кăтартакан Чăваш Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн

СВОДКИ

	Çулталăкри ĕçсен планне тултарни (пур ĕçсене те тата авăн çапнине суха ĕçĕ çине куçарса): План (гектарпа)	Плана тултарни процентпа	15 лаша вăйлă трактăр пуçне ĕçленĕ (гектарпа)	Гектар ĕçлеме сунтармали пĕтерне
Улатăр	29300	98,5	620	—
Елĕк	32570	91,8	549	16,8
Патăрйел	43190	115,0	766	17,0
Вăрнар	39910	115,3	843	15,8
Канаш	24850	91,8	617	16,8
Куславкка	28400	91,6	619	—
Кувакинă	39020	110,8	664	—
Йелчĕк	47060	116,7	787	15,6
Пăрачкав	46080	79,8	475	18,6
Тутаркас	[illegible]	99,5	541	16,3
Ишлей	[illegible]	122,0	714	—
Трак	32470	81,4	518	—
Вăрмар	44150	103,8	703	17,8
Çĕрпӳ	41360	89,7	598	13,7
Шупашкар	24290	90,1	521	—
Шăхасан	33820	105,5	637	15,7
Тăвай	31000	110,8	740	16,1
Йĕпреç	29100	122,3	835	16,8
Пĕтĕм республикипе	623540	102,4	653	—

Чăваш АСС Республик Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн нойабĕрĕн 1-шне кĕрхи çĕртме сухаласси мĕнле пынине кăтартакан

СВОДКИ

РАЙОНСЕМ	План (гектарпа)	Плана тултарнă (процентпа)	5 кун (20—25-X) хушшинче хушăннă (процентпа)
Улатăр	10700	87,5	6,5
Елĕк	16000	62,0	9,5
Патăрйел	16500	68,5	6,1
Вăрнар	17000	77,6	6,5
Йĕпреç	12500	83,9	7,5
Ишлей	13000	100,5	20,4
Канаш	11000	73,3	12,0
Куславкка	12000	103,4	9,7
Кувакинă	11000	115,6	5,1
Хĕрлĕ Чутай	11000	53,0	8,1
Сĕнтĕрвăрри	12500	81,0	8,0
Пăрачкав	14600	79,6	4,8
Турхан	9000	61,1	8,4
Тутаркас	15000	102,0	1,8
Трак	14000	78,0	—
Вăрмар	18000	79,7	15,4
Çĕрпӳ	18430	84,5	1,2
Шупашкар	12000	74,9	3,8
Шăмăршă	9000	63,9	5,5
Шăхасан	15000	76,3	—
Шăнкăртам	8500	96,4	—
Çĕмĕрле	7500	66,4	11,3
Йетĕрне	14170	81,6	8,1
Йелчĕк	18000	82,6	8,0
Тăвай	12000	85,1	—
ЧАССР-пе	328600	81,0	6,8

ТЕМТЕПĔР

Автомобил çинче кафе-ресторан

Америкă урамĕсенче автомобильсем çинчех кафе-ресторансем çӳреççĕ. Унта ĕçмели, çимелисем тата канмали майсем те пур.

Автомобиль çинче пыракан çын апат çиме, апат çинĕ хыççăн музăк итлесе пыма тата ташлама та пултарат. Çакăн пек походлă кафе-ресторансем çӳрекенсене стационалă“ кафене кĕрсе вăхăт ирттересрен хăтараççĕ.

(„Знание сила“).

* * *

Шăршлă тата саслă кино

Ковентрире пурăнакан Уорнерпе Кйули (Англи) хальхи вăхăтра шăршă кĕрекен саслă кино тăвас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Кинора курăнакан йапаласенчен çав вăхăтрах вĕсен шăрши те кĕрсе тăмала тăвасшăн. Аслăлăх йенчен шутласа пăхнă тăрăх, çакнашкал кино тума пур майсем те пур тесе шутлаççĕ.

(„Вокруг света“)

* * *

Интереслă тупăм

ССРС Аслăлăхсен Академин палеонтологи институчĕ кăçал Ленинград облаçĕнчи Вйаç шывĕ çинче авалхи пулăсен шăммисем тухакан вырăна чавса пăхнă.

Чавса пăхнă вырăнта питĕ авалхи пулă шăммисене тата скелет пайĕсене тупнă. Çав шăмăсем çĕр айĕнче 300 мĕлйун çул ытла выртнă тата вĕсем çурăм шăмилĕ чи малтанхи чĕрчунсем тесе шутлаççĕ.

Тупнă йапаласем органикăлă тĕнче мĕнле пуçланса кайнине тĕпчесе вĕренес ĕçре питĕ кирлĕ.

(„Правда“).

* * *

Мамонт виллине тупнă

Врангĕль утравĕ çинче хĕл каçакансем утравăн хĕвеланăç йенче шурă тилĕсем вальди апат çитермели нӳрт-кормушкă тунă вырăнта лайăх сыхланнă мамăнт виллине тупнă. Мамăнт тăршĕ 6 метр, сăмси (хобот)—3 метр, хӳри—90 сантиметр, çăмĕ 8 сантиметр тăршшĕ. Çурăм çинчи ашĕсем шурă, пуçĕ патĕнчисем хĕрлĕ тĕслĕ.

Академик А. А. Бориçак пĕлтернĕ тăрăх, ĕмĕршĕн тăракан вырăнта мамăнт виллисем ĕлĕк те тухкаланă, анчах вĕсене тискер кайăксем çисе пынă. Çакăн пек пĕтĕмĕшпе сыхланнă мамăнт виллине малтанхи хут тупнă.

Врангĕль утравĕ çинче хĕл каçакансем мамăнт виллине лайăх сыхласа усрама пулнă.

(„Правда“).

Октăбĕрти Социалисăмла революци çирĕм çул тултарас умĕн

Мадридра „Совет Сойузĕн ерни“

ВАЛЕНСИ, нойабĕрĕн 2-ш (ТАСС). Мадрид „Совет Сойузĕн ернине“ хавасланса уйавлат. Учреждениесен çурчĕсемпе ахаль çуртсем çинче йалавсем вĕлкĕшеççĕ. Аслă урамра йатарласа тунă арксем çине Сталин, Ворошилов тата Литвинов й-сен пысăк портречĕсене çакнă.

Делегацисем çул çинче

Испанирен, Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенчен, Англирен, Францирен, Австралирен тата ытти нумай çĕршывсенчен те делегацисем Мускава килме тухнă. Делегацисем халĕ Совет Сойузĕн порчĕсене, чикĕри станцисене çитсе пыраççĕ. Йутçĕршывсенчи ĕççыннисен представителĕсем, нойбĕрĕн 7-мĕшĕнче, Мускавра, социалисăмла тăван çĕршыври халăхсемпе пĕрле, Октăбĕрти Социалисăмла Аслă революци çирĕм çул тултарнине уйавлаççĕ.

(ТАСС).

Брӳсселри конференци уçăлнă

Нойабĕрĕн 3-мĕшĕнче Бельги столицинче—Брӳсселре, 1922 çулта Китай территорине никам тĕкĕнмеле мар тăвассипе пĕтĕм тĕнчери договор çине алă пуснă государствăсен конференцийĕ уçăлнă. Конференцийе Йапони Китайра çĕнĕрен агресси тунă майпа пухнă.

Конференцире Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен, Бельги, Китай, Франци, Португали, Голланди, Итали, Великобритани представителĕсем пур. Договор çине алă пуснă тăххăрĕмĕш держава—Йапони—конференцире пулма килĕшмĕн. Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи ĕçсемпе уйрăмăнах интересленекен государствă йачĕпе ССР Сойузне чĕннĕ. Унăн Литвинов, Потемкин тата Рубинин йулташсенчен тăракан делегацийĕ çавнашкалах конференцире хутшăнат.

Конференцин ирхи ларăвĕнче Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен делегачĕ Дивис, Англин йутçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Иден, Францин йутçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Дельбос, Итали представителĕ Альдрованди тухса сăмах каланă.

Кăнтăрлахи ларура чи малтан Литвинов йулташ тухса сăмах каланă.

(ТАСС).

Парикмахерскисемпе мунча уйав умĕнхи кунсенче

Октăбĕр уйавĕ умĕнхи кунсенче нойабĕрĕн 5—6-мĕшĕсенче Шупашкарти парикмахерскисем ирхине 7 сехетрен пуçласа каçхине 11 сехетчен ĕçлеççе. Ленин урамĕнчи тата Карл Маркс урамĕнчи парикмахерскисенче халиччен 12-шер çын ĕçленĕ пулсан, уйав умĕнхи кунçенче 15-шер çын ĕçлемеле тăваççĕ. Парикмахерскине пынă çынсен тумтирĕсене асăрхаса тăма йатарласа пĕр çын уйăрнă.

* * *

Шупашкарти мунчана шал йенчен тасатса хатĕрленĕ. Мунча пайанпа ыран ирхине 8 сехетрен пуçласа çĕрле 12 сехетчен ĕçлет.

СУД

Спекуляци тунăшăн—5 çуллăха

Улатăр хулинчи Михаил Иванович Йелисейев ĕçлемесĕрех тăранса пурăнмали май тупнă. Вăл 1935 çултанпах лашасем илсе сутса, спекуляци туса пурăннă. 1935 çулта кĕркунне Йелисейев Пăрачкав базарĕнче 1.555 тенкĕ парса илнĕ лашана 1936 çулхи майăн 15-мĕшĕнче 2.300 тенкĕле сутса йанă. Çав çулах ийунь уйăхĕнче Пăрачкав базарĕнче 2 пин тенкĕ парса лаша туйаннă, пилĕк уйăх иртсен çав лашана 3.800 тенке сутнă. Декабĕрĕн 5-мĕшĕнче „Красный путь“ колхозран 1.600 тенкĕ тăракан лаша илнĕ. Вăл лашапа 1937 çулхи апрелĕн 15 мĕшчен ĕçлесе усă курнă хыççăн, Козйайев спекулянта 2 600 тенкĕле сутнă. Тепĕр икĕ кунтанах Йелисейĕв 2.990 тенкĕле урăх лаша туйаннă, ăна та ийунь уйăхĕнче каллех Козйайева 3.700 тенке сутса йанă. Çакăн хыççăн вăл 275 тенкĕле тепĕр лаша илнĕ те, халь те вăл лашапах пурăнат.

1937 çулхи октăбĕрĕн 15-мĕшĕнче Улатăр хулинчи халăх сучĕ Йелисейев ĕçне пăхса тухрĕ. Суд, Уголовнăй Кодексăн 107-мĕш статйипе айăпласа, Йелисейев спекулянта 5 çуллăха хупса лартмала, виçĕ çул хушши саса прависĕр хăвармала тата лашине государствăлла тытса илмеле пригозăр йышăнчĕ. Октăбĕрĕн 22-мĕшĕнче Аслă судăн кассаци коллегийĕ суд приговăрне çирĕплетрĕ.

Мих. Полетайев.

Тĕрĕсленĕ заметкăсем

„Спекуляци тăват“

Именкасси йалĕнче (Турхан р.) пуçламĕш шкулта вĕрентекен учител А. Захаров ĕç укçипе çеç пурăнасшăн мар, тĕрлĕ хуласенчен йӳнĕ хакпа таварсем илсе килсе сутса пурăнат. 250 тенкĕшер парса виçĕ велосипед илчĕ те 600—650 тенке сутрĕ. Унăн арăмĕ те мануфактурăсемпе базарсенче сутă тăват, тесе çырнăччĕ.

Заметкăна тĕрĕсленĕ. Заметкăра çырнă фактсем тĕрĕс пулнă. Спекуляци туса пурăннăшăн Захаров учителе УК 107-мĕш статйипе айăпласа уголовнăй ĕç пуçарнă.

ИЗВЕЩЕНИЕ

Нижеследующие товарищи вызываются в Партколлегию при Уполномоченном КПК при ЦК ВКП(б) по Чувашской АССР в г. Чебоксары (ул. Плеханова, д. № 5)

на 10 ноября к 10 часам утра

1. Зотов П. И.—Алатырского района.
2. Мухин Н. А. — Тоже.
3. Рогушин С. И. — Тоже.
4. Гарев П. П. — Тоже.
5. Рыбенков А. П. — Тоже.
6. Матвеев А. М. — Аликовского района.
7. Васильев Н. В. — Тоже.
8. Афиногенов М.—Вурнарского р-на.
9. Сафронов Н. Е. — Тоже.
10. Троицкий М. В. — Ишлейского района.
11. Шмелев С. И. — Ибресинского района.
12. Максимова М. П. — Канашского района.
13. Яндушкин С. В. — Тоже.
14. Железков Т. К. — Тоже.
15. Мукшин И. З. — Тоже.
16. Федотов В. — Козловского района.
17. Кузнецова В. П. — Красночетайского района.
18. Глухова И. Д. — Марпосадского района.
19. Львова А. — Тоже.

На 11 ноября к 10 часам утра

20. Сидякин В. А.—Порецкого района.
21. Балденков Е. А. — Тоже.
22. Демин Т. Д. — Тоже.
23. Назаров М. Е. — Тоже.
24. Трофимова Е. Р. — Тархановского района.
25. Галимзянов — Шихирдановского района.
26. Кураков Т. М. — Шемуршинского района.
27. Швецов А. В. — Тоже.
28. Козелков Д. И. — Шумерлинского района.
29. Павлов А. П. — Цивильского района.
30. Владимиров Ф. В.—Чебоксарского района.
31. Вечтомов А. А. — гор. Чебоксары.
32. Милютин В. С. — Тоже.
33. Лаврентьев Т. Л. — Тоже.
34. Тимофеева К. В. — Тоже.
35. Андреев А. А. — Тоже.
36. Сычев П. П. — Тоже.
37. Миронов Н. С. — Тоже.
38. Алендеев Г. Т. — Тоже.

На 13 ноября к 10 часам утра

39. Данилов Д. Д. — г. Чебоксары.
40. Босляков А. Ф. — Тоже.
41. Орлова Е. — Тоже.
42. Сергеев Г. С. — Ядринского р-на.
43. Волков К. В. — Тоже.
44. Скворцов З. Ф. — Янтиковского района.
45. Иванов А. И. — Тоже.

Райкомам ВКП(б) просьба обеспечить явку вышеуказанных товарищей и выслать своих представителей.

Партколлегия.

Ответлă редактăр П. И. ИВАНОВ

МОСЗАГОТТОРГĂН ЧĂВАШ КАНТУРНЕ
Хурсене самăртса пусса хатĕрлеме
Специалист кирлĕ.
Условисем килĕшӳ тăрăх.
Адрĕс: Çĕмĕрле хули, Советскайа 1.
2—2.

Полиграфтрестăн 1-ш № типографине йалан ĕçлеме
аслă бухгалтĕр заместителĕ
економист-статистик
КИРЛĔ
Ĕçукçи килĕшӳ тăрăх.
2—2.

Шупашкарти „Кожупряжь“ ертелне
атă-пушмак çĕлекенсем,
çăматă йăвалакансем,
сторожсем тата уборщицăсем КИРЛĔ.
„Кожупряжь“ ертелĕн Правленийĕнче ыйтса пĕлмеле.
5—5. АДРĔС: Шупашкар, Ленин урамĕ, 6.

„Чăваш Коммунĕ“ çырăнса илмелли хаксем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха —2 т. 50 пус. Кĕсьрĕнсене кайма памасçĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 838. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста Заказ № 2870 Тираж 13694 58—92 см. 1—1 п.л.